24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ЯНВАРЬ 4 ВЫРСАРНИКУН 3(6028) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çĕнĕ ÿсĕмсемшĕн

Колхозла ялхуçалăхĕн тĕп задачисенчен пĕри яланах обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пур майсемпе те аталантарса пырасси пулнă. Çак задача халĕ, отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра, уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Мĕншĕн тесен ĕçсыннисен материаллă пурнăçне лайăхлатас, хамăрăн Хĕрлĕ Çара çителĕклĕ таранах апат-çимĕç парса тăрас ĕçсем пĕтĕмпех эпир выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес задачăна мĕнле пурнăçа кĕртнинчен килеççĕ.

Партипе правительство выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине яланах тимлĕн çавăрăнса пăхнă. Выльăх-чĕрлĕх продуктивносне ÿстернĕшĕн ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă постановлени колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе нумай çÿле çĕклеме пулăшрĕ. Колхозсемпе колхозниксем тăрăшса ĕçленине пула республикăра выльăх-чĕрлĕх йышĕ чылай ÿсрĕ. Çак ĕçĕн планĕ нумай колхозсенче ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пырать. Çĕрпÿ районĕнчи «Цивильстрой» колхоз, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан тата «Гигант» колхозсем, Етĕрне районĕнчи «Заветы Ленина» колхоз тата ытти нумай колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана пур енĕпе те ытлашшипех пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Сăмахран, Мăн Шемертенри «Заветы Ленина» колхоз мăйракаллă шултра выльăхсем ĕрчетес плана 125 процент, сыснасем ĕрчетес плана 225 процент, сурăхсем ĕрчетес плана 131 процент тултарнă. Выльăх ĕрчетес тĕлĕшпе çакăн пек тăрăшса ĕçлекен колхозсемпе районсем республикăра сахал мар. Анчах юлса пыракан колхозсен йышĕ те пĕчĕк мар-ха. Чылай колхозсенче халĕ те плана тултараймаççĕ, фермăсенче выльăхсен йышне ÿстерсе планпа пăхнă чухлĕ хисепе çитерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлемеççĕ.

Паллах, çак ĕçе пирĕн кăçал чылай лайăхлатмалла. Тунă ÿсĕмсемпе лăпланса ларасăр, выльăх ĕрчетес тĕлĕшпе малалла та пĕтĕм вăйа хурса тăрăшса ĕçлес пулать.

Пуринчен малтан, фермăсенче выльăхсен йышне планпа пăхнă хисепе ÿстерсе çитерес пулать. Колхозăн кашни ферминчех выльăхсен хисепĕ çителĕклĕ таранах пулмалла. Колхозра çак ĕçе йĕркелесе яма май çук пулсан, колхозниксенчен е базарта сутăн илсе выльăхсен шутне планпа пăхнă хисепе çитермелле.

Колхозăн выльăхĕсене пăхса усрас ĕçе пĕлсе организацилес пулать. Чирлесе е шăнса выльăх-чĕрлĕх вилни колхозсенче пулмалла мар. Кашни вилнĕ выльăхшăн айăплисене çирĕп ответ тыттармалла тăвас пулать. Выльăх çине выльăхла пăхни халĕ уйрăмăнах кирлĕ. Фермăра ĕçлекен кашни колхозникăн хăйне çирĕплетсе панă выльăха лайăх пăхса усрама тăрăшас пулать, уншăн ответлă пулас пулать.

Халĕ хăшпĕр колхозсенче выльăхсене пусас йăла сисĕнмеллех палăрма пуçларĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарман колхозсенче те, тĕрлĕ сăлтавсем тупса, выльăхсене какай тума пусаççĕ. Çак сиенлĕ йăлана хирĕç вăйлă кĕрешÿ пуçарса ямалла. Выльăх ĕрчетмелли плана тултарман, государствăна аш-какай парса татман колхозсенче выльăхсене пусма пачах чарас пулать. Колхоз председателĕсен çак тĕлĕшпе вĕсем çине пысăк ответлăх тиине яланах асра тытас пулать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре халĕ тепĕр ответлă тапхăр çывхарса килчĕ. Фермăсенчи выльăхсем пăрамлама, сурăлама, тăрулама тытăнаççĕ. Халĕ çуралакан çак çамрăк выльăхсене сыхласа усрани выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та фермăсенчи работниксен çамрăк выльăхсене кĕтсе илме яланах хатĕр тăрас пулать. Пĕтĕ выльăхсене ăшă пÿлĕмсенче усрас ĕçе организацилемелле, çамрăк выльăхсене пăхса усрама ăшă витесем хатĕрлесе хумалла, çамрăк выльăхсене çитерме апат хатĕрлемелле. Çак ĕçсене вара чылай колхозсенче хакламаççĕ-ха. Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен работниксен çакна шута илес пулать: кăçал илнĕ кашни çамрăк выльăха сыхласа хăварни пирĕн тăван çĕршывăн оборона пултарулăхне тĕреклетме, пирĕн продовольстви ресурсĕсене ÿстерме пулăшать. Çавăнпа та пĕр çамрăк выльăх та вилмелле мар туса ĕçе йĕркелени калама çук паха мероприяти пулса тăрать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшри тепĕр пысăк задача вăл — выльăх апатне перекетлĕн тыткаласси пулать. Хăшпĕр чухне колхозсенче çакăн пек тĕслĕхсене курма пулать: выльăх апатне мĕнле рационсемсĕрех, мĕнле учетсăрах расходлаççĕ, ăçта май килнĕ унта ним йĕркесĕр тата виçесĕр пăрахса параççĕ, çавăнпа вара пĕтĕм картишĕпех улăм е арпа сапаланса выртнине курма пулать, колхозниксем выльăх апатне ăçта май килнĕ унта никамран ыйтмасăр илсе каяççĕ. Çакă ĕнтĕ колхозра выльăх апатне хакламаннине, фермăсенче мĕнле йĕрке те çуккине кăтартса парать. Çавăн пек йĕркесĕрлĕх пуринчен ытла выльăх апачĕшĕн ответ тытакан çын çуккинчен килет. Ун пек колхозсенче вара арпа-улăма тата ытти фуража çаратас йăласем те пулаççĕ.

Паллах, çакă ĕнтĕ колхоза пысăк сиен кÿрет. Кашни колхозрах кашни выльăх валли çирĕп рацион пулмалла, ăна пурнăçа кĕртессишĕн ответ тытакан çынсем пулмалла. Выльăх апатне мĕнле тăкакланине колхоз председателĕн хăйĕн тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Çапла тусан çеç выльăх апатне перекетлĕн тыткалас ĕçе йĕркелесе яма пулать.

Çак çулте асăннă конкретнăй мероприятисене тĕрĕс тата пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртни колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та çак ыйтусем партин районсенчи организацийĕсемпе пуçламĕш организацисен ĕçĕнче те тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăмалла. Сталин юлташ пире выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе куллен ĕçлесе пыма хушать. Партипе совет работникĕсен, уйрăмăнах районсенчи çĕрĕç работникĕсен, колхозсенче çак ĕç мĕнле тăнине тĕплĕн пĕлсе конкретно ертсе пыма тăрăшмалла, кашни çитменлĕхе вăхăтра асăрхаса çийĕнчех пĕтермелле.

Халĕ уйрăмăнах лашасем ĕрчетесси çине вăйлăн çавăрăнса пăхас пулать. Пуриншĕн те паллă, лашасем тăван çĕршыва хÿтĕлес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн кашни чаçĕ лашапа усă курать. Хамăр тăван çĕршыва тискер фашистсенчен хÿтĕлеме Хĕрлĕ Çара кирлĕ таранах лашасем парса пулăшас тесен, пирĕн лашасене ĕрчетес ĕçе халĕ нихăçанхи пек мар тăрăшса пурнăçа кĕртсе пырас пулать. Çакăнта пĕрлех, хамăрăн колхозлă уйхирсенче ĕçлеме те лашасем сахал мар кирлĕ. Çавăнпа та вĕсене вăйлăн ĕрчетесси халĕ çавтери хисеплĕ задача пулса тăрать. Ку ĕнтĕ ытти выльăхсене ĕрчетес ĕçе манса хăвармаллине пĕлтермест. Пачах урăхла, Сталин юлташ пирĕн умма çакăн пек задача лартрĕ: «колхозниксем, арçынсемпе хĕрарăмсем, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, Хĕрлĕ Çар валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай, сĕт-çу, промышленность валли чĕртавар парса тăни кирлĕ», терĕ. Çак задачăна чыслăн пурнăçа кĕртес тесен, пур йышши выльăх-чĕрлĕхе те вăйлăн тата хăвăрт ĕрчетсе пымалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Январĕн 2-мĕшĕнче фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пынă, нимĕçсен фашистла войскисем хăйсем вăл-ли оборона рубежĕсем тума хăтланнине ăнăçлăн сире-сире пăрахнă. Пирĕн войскăсем халăх пурăнакан чылай пунктсене, вăл шутра Мало-Ярославец хулине, йышăнса илнĕ.

Тĕрĕслесе палăртнă даннăйсем тăрăх, декабрĕн 31-мĕшĕнче нимĕçсенне малтан кăтартнă пек 12 самолет мар, 31 самолет пĕтерсе тăкнă.

Январĕн 1-мĕшĕнче нимĕçсен 28 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 9 самолет пĕтнĕ.

* * *

Январĕн 1-мĕшĕнче пирĕн авиаци нимĕçсен 8 танкне, çар грузĕсем тиенĕ 595 автомашинине, снарядсем тиенĕ 334 лавне пĕтерсе тăкнă, чугун çул çинчи 6 состава взрыв туса сирпĕнтернĕ тата çунтарса янă, нимĕç пехотин 3 полкне ытла сапаласа янă.

* * *

Каялла чакакан противника хыçран йĕрлесе хăваласа пырса, Фирсов юлташăн чаçĕ, Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, пĕр кун хушшинчи çапăçусенче халăх пурăнакан 10 пункта нимĕçсенчен ирĕке кăларнă, нимĕçсенне автомашинăсемпе тягачсене тата тракторсене —85 машина, 87 мотоцикл, 80 çити велосипед, 8 оруди, 9 миномет, 7 пулемет тата 200 пичке бензин тытса илнĕ. Хăйĕн техникипе боеприпасĕсене тата обозĕсене пăрахса хăварса, противник хĕвеланăç еннелле каялла чакса пырать.

* * *

Недельное ялĕнче (Хĕвеланăç фрончĕ) вырнаçса тăракан тăшманăн войскисем çине кĕтмен çĕртен пырса тапăнса, Коротков юлташăн автоматчикĕсем нимĕçсен пысăк чаçне хăваласа янă. Противник, паникăна ÿксе, хăйĕн 270 автомашинине, моторĕсене ĕçе янăскерсене тата фарисене çутнăскерсене, пăрахса хăварса тарнă. Пирĕн боецсем нимĕçсен штабĕн нумай документсене, çĕнĕ çул кунĕнче салтаксемпе офицерсене пама хатĕрлесе илсе пынă фашист орденĕсене усракан автомашинăна, хирти почтăна тата пĕр обоза тытса илнĕ. Январĕн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Коротков юлташăн чаçĕнчи 15 йĕлтĕрçĕ-автоматчик К. ялне тытса илнĕ, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна сапаласа янă, 2 йывăр оруди тата пулеметсемпе винтовкăсем питех те нумай тытса илнĕ.

* * *

Мускав облаçĕн нимĕçсем оккупацилленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен Х. юлташăн партизанла отрячĕн ĕçĕсем çинчен çĕнĕ хыпар килнĕ. Юлашки вăхăтра отряд тăшманăн 30 автомашина, вăл шутра нимĕçсен штабĕн 4 машинине, боеприпассен складне пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен транспорт самолетне персе антарнă, питех те кирлĕ магистраль çинчи 2 кĕпере аркатса тăкнă тата фашистсен 90 салтакне, 9 офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансем шоссепе грунтовой çулсем çинчи нумай вырăнсенче минăсем хурса тухнă.

* * *

Хĕвелтухăç фронтĕнче Гитлер çарĕн ĕçĕсем ăнăççăр пулни Германи информаци бюровĕнчи фальшивомонетчиксен шайкине питех те хăратса ÿкернĕ. Нимĕç войскисем «позиционнăй вăрçа» куçни çинчен сÿпĕлтетни Германи халăхне лăплантарма пултарайманнине кура, геббельсла суеçĕсем Хĕвелтухăç фронтĕнче нимĕç офицерĕсем темĕнле юмахри пек паттăрла ĕçсем туни çинчен калакан халлапсем васкавлăн хатĕрлеме тытăннă. Çапла, сăмахран, Берлинри радио январĕн 1-мĕшĕнче çакăн пек пĕлтерÿ панă: Хĕвелтухăç фрончĕн вăтаçĕрти участокĕнче пĕр унтер-офицер (унтер-офицерăн хушаматне гитлеровецсем асăрханас майпа каламаççĕ!), вырăссен 42 йывăр танкĕн атакипе сирсе ярса, вĕсене хăваласа янă пулать, çавăнтах çав унтер-офицер хăйĕн пăшалĕнчен персе 6 машинăна пĕтерсе тăкнă пулать. Паллах, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче унашкал япала нимĕн те пулман, тата пулма та пултараймасть. Нимĕçсен командованийĕн çавăн пек черетлĕ суйине ĕненекен ухмахсем Германире хăйĕнче те сахал тупăнаççĕ пулĕ.

* * *

Омск облаçĕнчи ĕççыннисем çĕнĕ çула производствăри çĕнĕ çĕнтерÿсемпе кĕтсе илнĕ. Омскри çукна тĕртекен фабрикăн коллективĕ çулталăкри планран ирттерсе пĕр миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Беляшовăри çу çапакан завод коллективĕ планран ирттерсе 100 центнер ытла паха сортлă çу çапса кăларнă. Омск станцинчи железнодорожниксем хăйсен ĕç тухăçлăхне татти-сыпписĕр ÿстерсе пыраççĕ. Вагонсене вăтам ремонт тăвакан цехри платник Столбов юлташ сменăри задание 900-шер процент тултарса ĕçлет, Галинский тата Хорошенко платниксем кашни сменăра 7—8-шар норма тăваççĕ. Вагонсене куллен ремонт тăвакан цехра электросварщик Верещагин юлташ ĕçре рекордлă çитĕнÿ тунă. Кашни сменăра вăл 5—6-шар норма тултарса ĕçлет.

Январĕн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Январĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть противника хирĕç пĕр кун хушши хаяррăн çапăçса нимĕçсене халăх пурăнакан 3 пунктран çапса кăларнă, противникăнне 5 оруди, 8 пулемет, 3 миномет, снарядсемпе минăсем нумай тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче противник хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 750 виллине пăрахса хăварнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче, П. ялĕн районĕнче, пирĕн боецсем нимĕçсене хупăрласа илсе, 700 фашиста ытла вĕлерсе пĕтернĕ, нумай çар пурлăхĕсем тата продовольстви тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсем йышăнса тăракан Н. ялĕ çине (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) çĕрле пырса тапăнса, пирĕн боецсем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсенне 2 танк, 7 оруди, 35 автомашина, 12 пулемет, автоматсемпе винтовкăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен 106-мĕш пехотнăй дивизийĕн 240-мĕш полкĕнчи 10-мĕш ротăран иртнĕ кунсенче тыткăна лекнĕ старший стрелок Франц Вельфль çапла каланă: «Пирĕн ротăри салтаксем, дивизин мĕнпур личнăй составĕ пекех, шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен пĕтнĕ çынсем. Вĕсем çавтери ывăнса халран кайнă, начарланнă çынсем. Рота составĕнчен мĕнпурĕ те тăваттăмĕш пайĕ çеç юлнă. Эпир пурте хĕл каçма киле каятпăр тесе шанса пурăнтăмăр, пире пирĕн командовани яланах çапла шантарса тăчĕ, анчах та çавăн пек шантарни пĕтĕмпех ултав пулчĕ иккен. Вырăссем наступлени тума пуçласан, пирĕн салтаксен шухăш-кăмăлĕ пĕтĕмпех пăсăлса кайрĕ. Дисциплинăна тытса тăрас тесе, батальон командирĕ майор Мюллер пире çапла каларĕ: эпир пĕр 30 километр чакатпăр та, унтан çирĕпленсе ларнă хыççăн татах малалла хайма тытăнатпăр. Çакна халĕ ĕнтĕ, паллах, никам та ĕненмест. Салтаксенчен пĕри командира çапла ответ пачĕ: «Çапла, эпир малалла каятпăр, анчах каялла чакса пыратпăр», терĕ. Мюллер ăна хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ. Салтаксенчен нумайĕшĕсем халĕ нимĕн тĕллевсĕр вăрçа малалла туса пырассине хирĕç. Анчах начальствăран хăрани тата хаяр наказанисенчен шикленни салтаксене хăйсен шухăшĕсене уççăн каласа парассинчен халлĕхе тытса тăрать. Çапах та вĕсем пурте хăйсем вăрçăпа килĕшменнине усăмлăрах та усăмлăрах палăртаççĕ. Пирĕн ротăра темиçе штурмовик пур. Ĕлĕкрех килĕшмен япаласем çинчен вĕсен умĕнче каласа пама юрамасчĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем çак калаçусене хăйсем те хутшăнаççĕ, анчах ун çинчен офицерсене кайса каламаççĕ. Нимĕç салтакĕсем текех ĕнтĕ Германи çĕнтересси не ĕненмеççĕ».

* * *

Тыткăна лекнĕ çар çыннисене хупса усрамалли Киев çывăхĕнчи Дерницки лагерьте нимĕçсем Киев облаçĕнчен пухнă мирлĕ халăха темиçе пин çынна тытса усраççĕ. Çав лагерьти çынсем усă çĕртех выртса-тăрса пурăнаççĕ, вĕсене 10—15-шер кун хушши çăкăр памаççĕ. Фашистсен хуралçисем лагерьте хупса усракан çынсенчен мăшкăллаççĕ, вĕсене патаксемпе тата прикладсемпе хĕнеççĕ. Фашистсен йĕркине килĕштерменнине капит та пулин палăртнăшăнах вырăнтах персе пăрахаççĕ.

* * *

Нумаях пулмасть Берлинри Антагальтски вокзалра хĕрарăмсен пысăк ушкăнĕ икĕ çар эшелонне Хĕвелтухăç фронтне ярассине чăрмантарма хăтланса пăхнă. Хĕрарăмсем паровозсем умĕнчи рельссем çине выртнă. Полиципе жандармсем хĕрарăмсене хăваласа салатма пултарайман. Чĕнсе илнĕ «СС» отрячĕ хĕрарăмсем çине пулеметсенчен пеме тытăннă. Темиçе вуншар çынна вĕлернĕ тата амантнă.

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНТĔНЧИ ВОЙСКĂСЕМ ДЕКАБРĔН 26-мĕшпе 31-мĕш ХУШШИНЧЕ ТЫТСА ИЛНĔ ТРОФЕЙĂСЕМ

Малтанлăха шута илнĕ туллимар даннăйсем тăрăх, Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем 1941 çулти декабрĕн 26-мĕшпе 31-мĕш хушшинче противникăнне çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем—60, бронемашинăсем—11, орудисем—287, минометсем—91, пулеметсем—461, автоматсем—309, винтовкăсем—2211, автомашинăсем—938, мотоциклсем—249, велосипедсем—1.448, тракторсемпе тягачсем—36, радиостанцисем—7, лавсем—226, паровозсем—40, вагонсем—425, чугунçул эшелонĕсем: боеприпассемпе—1, обмундированисемпе—1, çыхăну пурлăхĕсем—темиçе вагон, продовольстви — 14 вагон, авиабомбăсем, минăсем тата снарядсем—14 вагон, тирсем—пĕр вагон, офицерсемпе салтаксен япалисем—3 вагон, мотоциклсем—1 вагон, велосипедсем—1 вагон.

Тытса илнĕ артиллери склачĕсенчи япаласене малтанлăха çакăн чухлĕ шута илнĕ: снарядсем—20.368, снарядсем тултарнă ещĕксем—1.190, минăсем—42.916, патронсем—6.193.000.

Нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсене 15.000 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

ХĔРЛĔ ÇАР ВАЛЛИ АШ-КАКАЙ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Типçырма ялсоветĕнчи «Пахарь» колхоз Хĕрлĕ Çар валли пĕр вăкăр, пĕр така тата пĕр сысна самăртма тытăнчĕ. Колхоз председателĕ Иванов юлташ Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли 50 çамарта, колхозник Трофимов 30 çăмарта пачĕç.

Çавăн пекех «Татмăш» колхоз та пĕр вăкăр тата пĕр сысна самăртать. «Буксир» колхоз оборона фондне татах пĕр центнер аш-какай, 500 грамм çăм парать. Юлашки вăхăтра районри колхозсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем вăрçă фрончĕсенче çĕнĕ çĕнтерÿсем туни çине ответлесе оборона фондне çĕнĕрен сĕт-çу, çăмарта пама тытăнчĕç.

И. ХАТАЕВСКИЙ

Польша гражданĕсене пулăшу пама Польша республикине кивçен укçа-тенкĕ парасси çинчен ССР Союзĕпе Польша республики килĕшÿ туни

1941 çулти декабрĕн 31-мĕшĕнче Куйбышев хулинче ССР Союзĕн территорийĕ çинче пурăнакан Польша гражданĕсене пулăшу пама Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн правительстви Польша республикин правительствине 100 миллион тенкĕ кивçен парасси çинчен килĕшÿ туса алă пуснă.

Килĕшÿ çине СССР правительстви хушнипе— ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ тата Ютçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн пĕррремĕш заместителĕ А. ВЫШИНСКИЙ, Польша республики панă полномочи тăрăх Польша республикин чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ г-н КОТ алă пуснă. (ТАСС).

Столицăра çĕнĕ çула кĕтсе илни

Çĕнĕ, 1942 çула Мускав—герой-хула—яланхи пек мар условисенче кĕтсе илчĕ. Совет Союзĕн аслă столицин стенисем патĕнчен хĕвеланăç еннелле аяккарах та аяккарах чакса пыракан тăшмана пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкассине çирĕппĕн шанса тăрса кĕтсе илчĕ.

Каçхине 6 сехет тĕлнелле хулан урамĕсене халăх тухса тулчĕ. Трамвайсемпе троллейбуссем пассажирсене турттарма аран ĕлкĕрсе пыраççĕ. Мускав халăхĕ васкать: пĕрисем—хăйсен килĕсене, çемьери тÿрĕ шăпăлăха, теприсем—çĕнĕ çулăн шавлă та хаваслă балне каяççĕ.

Пролетарски тата Тагански районсенчи çамрăксем, яланхи пекех, хăйсен культура дворецне пухăнаççĕ. Фойере çĕнĕ çул юррисемпе музыкин шавĕнче 10 метр çÿллĕш елка çутăлса кайрĕ. Елка çинчи лампăсем çутăлсанах, çĕр-пĕр çын карталанса хаваслăн çавăрăнма тытăнчĕç. Вĕсем хушшинче — çар çыннисем нумай. Вĕсем—Тула патĕнчен, Венев патĕнчен, Мускавăн сывлăшран тапăннине хирĕç тăмалли зенитнăй точкăсенчен килнĕ хăнасем.

Н-ски госпиталь. Çĕнĕ çул ыран тенĕ чух кунта 8 çăмламас елка илсе килнĕ. Няньăсемпе медицина сестрисем вĕсене юратса питĕ ăста илемлетнĕ те, халĕ вĕсем аманнă боецсемпе командирсен çĕнĕ çул уявĕнче ялкăшса çунаççĕ. Госпитале хăнасем нумай килнĕ. Вахтангов ячĕпе тăракан театрăн артисчĕсем елка патĕнче, боецсем, врачсем, няньăсемпе сестрасем хушшинче хăйсен мастерлăхне кăтартаççĕ. Шефсем, Н-ски заводра ĕçлекен рабочисемпе служащисем аманнă боецсене çĕнĕ çул саламĕсемпе пĕрлех тортсем, печенисем, конфетăсем, шоколадсем, лайăх хĕрлĕ эрехсем парса панă. Уяв чи хĕрсе пынă вăхăтра Малăй Театрăн артисчĕсем пырса çитрĕç. Концерт питĕ çĕрлене кайрĕ.

...1941 çулăн юлашки сехечĕ. Радио мĕнпур çĕршывĕпех Михаил Иванович Калининăн çĕнĕ çул ячĕпе каланă сăмахне сарать. Совет çыннисем хаваслă çĕнĕ хыпар пĕлеççĕ. Хĕрлĕ Çар Калуга хулине фашистсенчен туртса илсе ирĕке кăларнă. Çĕнĕ çул тĕлне Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем çĕршыва паха парнесем нумай пачĕç.

Çурçĕр. «Интернационал» музыкин малтанхи сассисемпех нимĕç оккупанчĕсене аркатса тăкассишĕн, боецсемпе командирсен сывлăхĕшĕн, аслă Сталинăн сывлăхĕшĕн пиншер-пиншер бокалсем çĕкленчĕç.

1942 çулăн малтанхи минутисем хушшинче Клара Цеткин ячĕпе тăракан ача çуратмалли çуртра столицăн çĕнĕ çынни—Женя Корнеев, сывлăхлă та кăшкăраканскер,—çут тĕнчене тухрĕ. Акушерка Валентина Андреевна Павлова çамрăк амăшне саламласа ывăлне телей сунчĕ. Çак ир фронта çакăн пек телеграмма кайрĕ: «Ывăл çуралчĕ, Женя ятлă хутăмăр. Сана та, санăн çапăçури юлташусене те çĕнĕ çул ячĕпе саламлатпăр, çĕнтерÿ тума сывлăхпа телей сунатпăр».

Çĕнĕ çул, совет халăхĕ этемлĕхĕн чи хаяр тăшманне—Германи фашизмне тĕппипех çĕнтермелли çул пуçланчĕ.

(ТАСС).

Гварди ялавне пани

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, январĕн 2-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Шăнса ларнă юханшывăн юрпа витĕннĕ тÿрем те тарăн улăхĕнче гвардейски дивизин полкĕсемпе батальонĕсем, уйрăм чаçĕсем тÿрĕ тăваткĕтеслĕх евĕрлĕ йĕркеленсе тăрса тухнă. Ку дивизи халăх пурăнакан вуншар пункта нимĕç оккупанчĕсенчен туртса илсе ирĕке кăларнă. Стройра—пехотинецсем, разведчиксем, артиллеристсем, саперсем, зенитчиксем, связистсем тăраççĕ. Паян вĕсен пысăк уяв—вĕсене гварди ялавне параççĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕ хушнă тăрăх ялава генерал-лейтенант Яковлев парать. Бархатпа сăрнă ялавăн авăрне тытса, Яковлев юлташ гвардеецсене саламласа кĕске сăмах калать:

— Çак ялава нумаях та пулмасть фашистла тискер кайăксенчен туртса илсе ирĕке кăларнă çĕр çинче пама тÿрĕ килни мана уйрăмăнах савăнтарать,—тет вăл.—Çак чыслă ялав айĕнче гвардеецсем татах та чаплă çĕнĕ ĕçсем тăвассине командовани шанса тăрать.

Ялава дивизи командирĕ генерал-майор Андреев йышăнать. Вăл, чĕркуççленсе тăрса, чаплă тупа сăмахĕсене калать:

— Мĕнпур фашистла тискер кайăксене пĕтерсе тăкиччен те пирĕн чĕресенче çунакан тавăру вучĕ сÿнес çук тесе эпир çак боевой ялав айĕнче тупа тăватпăр. Тăшмана татах та хăватлăнрах пырса çапас тесе, хамăрăн мĕнпур вăйпа, çапăçури пĕлÿлĕхпе вăрçăри чеелĕхпе усă курса, эпир татах та паттăррăнрах çапăçăпăр.

Чĕркуççисем çине тăрса, гвардеец-боецсем, командирсемпе политработниксем:

— Тупа тăватпăр!—тесе татăклă сăмах калаççĕ.

Генерал-майор Андреев ялава дивизи пуçĕнче пыракан полк командирне Слепков майора парать. Слепков майор çак мухтавлă ялава этемлĕхĕн ылханлă тăшманне—фашизма хирĕç пыракан пур çапăçусем витĕр те çĕнтерÿллĕн çĕклесе тухма чаплăн тупа тăвать.

Çакăнта пухăннă гвардеецсем хăйсен боевой юлташĕсен ячĕпе пур гвардейски дивизисем патне те, гитлеровецсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас ĕçе пĕтĕм вăй-хăвата хума чĕнсе каласа, çыру яма йышăннă.

Халăхсен тата Хĕрлĕ Çарăн çулпуçĕ Сталин юлташ патне салам яма гвардеецсем çавтери хавхаланса йышăнаççĕ.

Митинг вĕçленчĕ. Гвардеецсем хăйсен ялавĕ умĕнчен церемониальнăй маршпа утса иртеççĕ.

Е. КАПЛАНСКИЙ.

Танксен соединенине тума

Удмурт республикинчи «Универсал» промсоюз коллективĕ танксен соединенине тума укçа-тенкĕ пухма чĕнсе каланине Чăвашпромсоюз системинче ĕçлекен кустарьсем кăмăллăн кĕтсе илчĕç. Пĕр уйăх çурă хушшинче кăна Чăвашпромсоюз артелĕсем танксем тума 113 пин тенкĕ укçа пухса панă.

Ишлей районĕнчи Чурачкăри тата Мăналри артельсем 7-шер пин тенкĕ, Ишекри тата Шоркассинчи артельсем 5-шер пин тенкĕ пухса панă.

Танксен соединенине тума укçа-тенкĕ пухас ĕçе Шупашкар районĕнчи артельсем те активлăн хутшăнчĕç. Лапсарти артель коллективĕ 7 пин тенкĕ, Сĕньял-Ойкасри артель 5 пин тенкĕ укçа пухса пачĕç.

Анчах çак ĕçе çителĕклĕ хутшăнман артельсем те пур-ха. Сăмахран, Канаш районĕнчи Янкльчă, Абакасси тата Çĕрпÿ районĕнчи Туçи артелĕсем кÿ тарана çитсе те танксем тума укçа-тенкĕ пухман. Çак артельсен малта пыракан промартельсенчен пример илсе ĕçе тытăнмалла. Артель членĕсен пĕрин те танксен соединенине тума пулăшас ĕçе хутшăнмасăр юлмалла мар.

С. САРРО.

Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри ĕççыннисем январĕн 1-мĕш тĕлне Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пурĕ 1140 килограмм çăм, 2 пин ытла тир, 127 ăшă çĕлĕк, 304 мăшăр алшиш-чăлхасем, 745 мăшăр ăшă тăла пухса панă. Пухнă çăмран 437 мăшăр çăматă йăвалаттарса янă, тирсенчен 54 кĕрĕк пиншак çĕлеттернĕ.

И. Х.

Ачасем каникулта

ÇĔРПУ. Шкулсенче вĕренекенсен хĕллехи каникулĕсем пуçланчĕç. Кăçал каникулсем, иртнĕ çулсемпе танлаштарсан, урăхла условисенче иртеççĕ. Çапах ачасем хăйсен кану вăхăтне савăнăçлă ирттерме тăрăшаççĕ. Кашни шкулта пекех елкăсем пулса иртрĕç.

Каникул вăхăтĕнче ачасем ытларах усă сывлăшра пулма тăрăшаççĕ: çунашкапа, йĕлтĕрсемпе ярăнаççĕ, ăмăртусем ирттереççĕ. Тепĕр чухне кунĕ-кунĕпех колхозра ĕçлеççĕ.

8—10-мĕш классенче халĕ те вĕренеççĕ. Вĕсен занятисем йĕркеллĕ пыраççĕ.

Г. ПЕТРОВ.

НАРО-ФОМИНСКРА

Эпир пирĕн войскăсем наступлени туса иртсе кайнă çул тăрăх пыратпăр. Çул хĕррисенче халь кăна пулса иртнĕ çапăçусен картинисем сăнланса пыраççĕ. Тăшманăн танкĕсем вăйсăррăн пĕкĕрĕлсе тăраççĕ. Вĕсенчен пĕри, сиксе ÿкме хатĕрленнĕ тискер кайăк пек, кайри кустăрмисем çине тăнă. Унăн урисене — гусеницисене çапса çĕмĕрнĕ. Вăл, çак броньăпа витĕннĕ свастикăллă шакал, сиксе ÿкме ĕлкĕреймен. Çул çинче куçса çÿрессе кăнтăрла та, çĕрле те лăпланмасть. Чаçсем фронт линийĕ патнелле куçаççĕ, тылри чаçсене позици çывăхнерех илсе пыраççĕ. Вĕсене хирĕç тыткăна лекнĕ нимĕçсем сулланса утаççĕ. Вĕсен ик енĕпе — конвойсем.

Эпир Наро-Фоминск хĕррине пырса çитрĕмĕр. Кунта пирĕн хамăрăн «эмкăна» пăрахса хăварма тиврĕ. Хулара халĕ машинăла çÿремеççĕ-ха. Хулана лашасемпе те пырса кĕме юрамасть. Кун пек транспортпа çÿреме кунта халĕ хăрушă-ха. Нимĕçсем урамсене минăсем лартса пĕтернĕ. Пур çĕрте те саперсем ĕçлени курăнать. Вĕсем хăйсен йĕри-тавра мина шырамалли приборсемпе хыпашласа, юр çине асăрханса пусса утса пыраççĕ. Ансăр сукмакпа утмалла. Пире ертсе пыраканĕ — çар политотделĕн начальникĕ полковой комиссар Вишневецкий: «Асăрханарах!» тесе астутарать. Тепĕр пилĕк минута çеç иртрĕ, пирĕнтен темиçе метр çеç аяккарах çамрăк сапер мина çине пырса кĕрсе сирпĕнсе кайрĕ.

Чугунçул линийĕ тăрăх та çынсем ĕçleme пуçланă. Вĕсем çула тасатаççĕ. Кăшт аяккарах шурă уссиллĕ инженер тăрать. Вăл тĕмĕнле цифрăллă формулăсене илтĕнмеллех калать. Вăл нимĕçсем ишĕлтерсе хăварнă кĕпере юсамалли расчетсене шутласа хурать. Вăл, хăй мăкăртатнине итлесе тăнине сисет те, кăшт именнĕ пек пулса ăшшăн кулать, унтан татăклăн сăмах хушать: «Паллах, эпир çав тискер кайăксене часах вĕсем пирĕн патăмăрта аркатса хăварнисене нумайĕшне çĕнĕрен тутарма тытăнăпăр. Анчах халĕ кĕтме вăхăт çук. Кăна эпир хамăрах йĕркелĕпĕр», — тет.

Эпир пăр урлă Нара юханшывĕн тепĕр çыранне каçатпăр. Пирĕн умра — ĕлĕк Наро-Фоминск ятлă пулнă хулан тĕп пайĕ. Хула, питĕ вăйлă çĕр чĕтренĕ хыççăнхи пекех, ишĕлсе пĕтнĕ. Нимĕçсем аркатма ĕлкĕрейменнисене пурне те вут тивертсе çунтарса янă. Пир-ивăр тĕртекен фабрикăн общежитийĕ пулнă çуртран нимĕне пĕлмен çулăм халĕ те ÿркенчĕклĕн йăлкăшса тухать. Эпир вилĕ хула тăрăх утса çÿретпĕр. Пĕр урам хыççăн тепĕр урама, пĕр квартал хыççăн тепĕр квартала пăхса тухатпăр. Чÿречесенчен çуртсем ăшнелле пăхатпăр. Хулара пурăнакан çынсем çук. Вĕсене вăхăтрах эвакуацилесе илсе тухса кайнă. Вĕсем халь таварăнас пулсан, хăйсен хваттерĕсене, вĕсем пушартан сыхланса юлнă пулин те, палласа илейрес çук. Пÿлĕмсене çаптери лапăртаса, вараласа пĕтернĕ, вĕсенче çынсем мар, тискер упăтесен кĕтĕвĕ пурăннă тесе калăн.

Сăмахран, çак темĕн пекех шăршланса кайнă хваттерте пĕтĕмпе те икĕ офицер кăна пурăннă иккен. Вĕсенчен пĕрине пирĕн боецсем тыткăна илнĕ. Çапăçăвăн юлашки кунĕнче вăл кунĕпех эрех ĕçнĕ. Пирĕн боецсем пырса кĕнĕ чухне вăл çуртасем çутса, порнографилле ÿкерчĕксем çакса илемлетнĕ елка кутĕнче сывăрса ларнă. Усĕр лейтенант лутра пукан çине ларнă та пуçне тĕрлĕ тасамарсемпе пушă ром кĕленчисем хушшинче хурса сывăрнă.

Наро-Фоминскра нимĕçсем тискерленнин паллисем çук. Малтанах ку пире тĕлĕнтерсе ячĕ — гитлеровецсем хăйсен юнлă йăлисене улăштарма пултарнă-ши вара? Кайран эпир хулара халăх пулманнине аса илтĕмĕр. Фашистсен çынçиенĕсем хулара халăх çуккишĕн мĕнтери пăшăрханчĕç-ши? Хулара мирлĕ çынсене тупайман пирки, вĕсем пĕтĕм районĕ тăрăх пăлхатса çÿреме тытăннă. Наро-Фоминск çывăхĕнчи ялсенче вĕсем вара тăрăничченех алхаснă. Нимĕçсем Могутовски ялсовет председательне вĕлернĕ. 50 колхознике тата 53 колхозницăна персе пăрахнă.

Анчах вĕсен сăхă тунĕсене ку та сирлахтарайман. Утмăл виçĕ кун хушши вĕсем Наро-Фоминскра тăнă, анчах темĕн териех тапаçланнă пулин те малалла кайма пултарайман. Хăйсен ăнăççăр ĕçĕсемшĕн вĕсем совет çыннисене тавăрнă. Колхозниксем пурăнма куçнă землянкăсене гитлеровецсем тăрăшсах шыраса, вăрманти уçланкăсене пăхса тухнă, хĕрарăмсене, стариксемпе ача-пăчасене васкамасăр асаплантарса вĕлернĕ.

Фашистсем уйрăм командăсем тунă. Икĕ нимĕç йытăсем ертсе малта пынă. Вĕсем шыраса тупнă землянка патне паллă лартса хăварнă. Çак икĕ «йĕрлевçĕ» хыççăн виçĕ палач пынă та землянкăри çынсен пуçĕсем çине нимĕн хыпаланмасăр гранатăсем пăрахнă.

Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем гитлеровецсене пĕтерсе пырса, чăнах та ĕнтĕ, мĕнтери пархатарлă та таса ĕç туса пыраççĕ. Хула скверĕн карти тепĕр енче, вилĕм парадĕнчи пекех, хĕрессем тÿрĕ йĕркепе вырнаçса тăнă. Çаксем ĕнтĕ нимĕçсен вилтăприсем. Кунта хĕрĕх фашиста пытарнă. Пĕр хĕресĕ çинче эпир çапла çырнине вулатпăр: «Роберт Мюллер — оберлейтенант».

—Тата унăн роти! — тесе хушса хурать такăшĕн хаваслă сасси. — Кунта вĕсем дивизийĕпех шăнăçтарма пултарнă. Вĕсем те перекетлĕме пĕлеççĕ иккен. Пĕр хĕрес айне взвочĕпех пытараççĕ!

Эпир çавăрăнса пăхрăмăр. Ку сăмахсене трофейăсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен командăн сержанчĕ калать иккен. Унăн аллинче нимĕçсем тунă хура та хуçкаланчăк хуткупăс.

— Акă мĕн тупрăм, — терĕ вăл кула-кула. — Малтан илес мар тет-тĕм те «Яблочко» выляса çак музыкăна минăран тасатрăм.

Вăл мĕн каланине эпир ăланаймарăмăр. Сержант Григорий Константинов хут купăса тăсса ячĕ. Вара сивĕ сывлăшра пирĕн «Яблочкăн» уçă кĕввийĕ янăраса кайрĕ.

Вара хула сасартăках ыйăхран вăранса чĕрĕлнĕн, иртнĕ тискер кунсен ĕмĕлкисене сирсе пăрахнăн туйăнчĕ. Çавăрăнса пăхрăмăр та, çак урамсенче пирĕн пĕчĕк ушкăнсăр пуçне тата урăх çынсем те пуррине куртăмăр. Эпир кунта иртернĕ вăхăтра хулана çынсем килсе вырнаçма пуçланă. Акă хĕрлĕ питлĕ, йăл-йăл кулакан икĕ хĕр утса пыраççĕ. Мария Алфимовăпа Елизавета Лукьянова — ткачихăсем. Наро-Фоминскра нимĕçсем пулнă вăхăтра вĕсем Апрелевкăра пурăннă. Инçене кайма кăмăл туман. Хăйсен тăван хулине таварăнассине пĕлнĕ. Вĕсем иккĕшĕ пĕрле пĕр çуртра пурăннă. Халĕ унăн тăррине сÿсе пăрахнă, стенисене пĕчĕк калибрлă снарядсемпе шăтарса пĕтернĕ. Анчах хĕрсем пÿрт тăррине хăйсемех вăхăтлăха хăмапа витеççĕ, — пĕчĕк çурт тăррине витме йывăр ĕçех мар вĕт,— стенасенчи шăтăксене тăмпа питĕрсе лартаççĕ те вара пурăнма пуçлаççĕ. Фабрикăна ĕçе яма пулăшаççĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе çапла калаçса татăлнă.

Эпир вĕсемпе пĕрле фабрикăна каятпăр. Пĕр тăп-тăп боец васкамасăр иртсе каять. Хĕрсем ун патне чупса пыраççĕ те унăн аллине нумайччен чăмăртаççĕ. «Тавтапуç, тăванăм, пирĕн хулана нимĕçсенчен туртса илнĕшĕн, тавтапуç». Боец пăлханнипе хĕрелсе кайрĕ, унтан хĕрсен аллинчен çăлăнса тухайманнине кура, кăмăлсăррăн, хулăм сасăпа сăмах хушрĕ: «Эпĕ хулана илмен. Эпĕ—повар», терĕ. Туссем самантлăха нимĕн тума аптранă пек пулчĕç, унтан Мария Алфимова: «Пурĕ-пĕр, тавтапуç. Сире пурсăра та тавтапуç», тесе вĕçлерĕ.

Эпир фабрика патне пыратпăр. Лара-тăра пĕлмен хĕрсем татах такампа тĕлпулма васкаççĕ. Халĕ вĕсем Наро-Фоминск райисполкомĕн председательне Староверова палласа илчĕç. «Акă, совет влаçĕ те таварăнчĕ, — тесе кăшкăрса ячĕ Мария Алфимова. — Халĕ те эсир пирĕн патăмăртах ĕçлетĕр-и?» — «Кунтах ĕçлетĕп», — тесе таварчĕ Староверов. Мĕн иртенпех вăл кунта Мособлисполком председателĕпе Тарасовпа пĕрле çÿрет. Вĕсем пăхса çÿренĕ чухнех хулана мĕнле йĕркене кĕртмелли çинчен калаçса татăлнă.

Ноябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче пирĕн чаçсем хула хĕррин хĕвелтухăç енчен ансăр савăл пек шăтарса кĕрсе наступлени тума пуçланă. Çак савăлăн шĕвĕр вĕçĕ фабрика хÿми пулса тăнă. Фабрика цехĕсенче Кудрявцев командирăн гвардейски роти оборона йышăнса тăнă. Хохлачев капитанăн артиллерисчĕсем Матвеев лейтенант командир пулса ертсе пынипе хăйсен наблюдатель разведчикĕсене фабрикăна янă.

Арлакан цехпа юнашар ларакан водонапорнăй башня тăрринчен хулан хĕвеланăçĕнчи пайĕ тата нимĕçсем йышăнса тăракан аякри ялсем лайăх курăннă. Наблюдательсем хăйсен полкĕн командный пунктне умри тĕллевсем çине кăтартса панă та, пирĕн орудисем вара фашистсене таттисыпписĕр персе тăнă. Нимĕçсем пирĕн гвардеецсене тата артиллеристсен группине вутпа путлантарма хăтланса пăхнă. Анчах вĕсем хăйсен миномечĕсенчен фабрика çине пеме тытăнсанах, вĕсен батарейисене пирĕн тупăсем хупласа лартнă.

Фабрикăна çурри таран ишĕлтерсе пĕтернĕ, анчах фабрикăра çирĕпленсе ларнă çынсем унăн кивĕ стенисенчен те çирĕпрех, унăн кирпĕчĕсенчен те чăтăмлăрах пулнă. Наро-Фоминскшăн татăклă çапăçусем пуçланса кайсан, нимĕçсем чакма тытăннă. Вара фабрика гарнизонĕ фабрика хÿми тулашне тухнă та, лейтенант Матвеев, хула центрне чи малтан пырса кĕрсе, унăн нумай хутлă çурчĕ тăррине совет ялавне çирĕплетсе лартнă. Çил ялава хаваслăн варкăштарнă. Эпир Наро-Фоминскран тухса кайнă чухне каялла çавăрăнса пăхатпăр та, пĕлĕт çине çÿле çĕклентернĕ хĕрлĕ пăнчăна нумайччен куçран сухатмастпăр.

А. КРИВИЦКИЙ.

(«Красная Звезда» хаçатран).

Вĕсем мĕнле чакаççĕ

(«Красная звезда» хаçатăн спецкорĕ)

Нимĕç фашисчĕсен генерал-полковникĕ Штраус ертсе пынă 9-мĕш çарĕн юлашкийĕсем хăйсене Калинин хулинчен хăваласа кăларнă хыççăн, йĕркесĕр ушкăнсемпе кĕпĕрленсе, Хĕвеланăç еннелле вăркăнчĕç. Çав çĕтĕк-çатăк тумтирлĕ сĕтĕрĕнчĕксене халĕ ниепле те гитлеровецсен «маттур» салтакĕсем тесе калас çук. Вĕсем ĕнтĕ — мĕскĕнскерсем, выльăхла шиклĕхпе хавшанă таркăнсем — хăйсен тирĕсене çăлса хăварасси çинчен çеç шухăшлаççĕ. Вĕсен кĕсен-çăпанпа витĕннĕ, çĕрме пуçланă ÿчĕсене вырăнти халăхран çаратса илнĕ тумтирсем ăшăтма пултараймаççĕ. Ĕнер кăна пурне те тустарса çĕмĕрекен Фрицăн чунĕнче наступлени тăвас, марш уттипе малалла каяс вăй-хал пĕтĕмпех иксĕлсе çитнĕ.

Нимĕç çарĕн командованийĕ хăйĕн шăнса хытăрканă, халран кайнă кĕтĕвне Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапакан вырăнсенчен мĕнле те пулин илсе тухма тăрăшать, çакăн пирки вăл мĕнпур вăйне хурса, тискеррĕн те аяррăн хирĕç тăрса кĕрешет. Нимĕçсен шучĕпе, хăйсен хыçа хăварнă отрячĕсем пĕр вĕçĕмсĕр персе тăни, ан тăранă автоматчиксем атакăсем туни, тивретсе янă ялсем çулăмпа кĕрлени, минăсем лартса тултарни, çĕрлехи вăхăтсенче пĕрмаях ракетăсем ярса тăни, — çаксем пурте пирĕн наступленине чарса тăма тата вĕсене çĕнĕ рубежсенче çирĕпленсе тăма пулăшаççĕ пулать. Анчах та тăшманăн шухăшĕ пурнăçа кĕреймест. Калинин фронтĕнчи Конев генерал чаçĕсен наступлени тăвас хăвачĕ чакмасть.

Чакакан тăшман хыçĕнченех эпир пĕр чаçсемпе пĕрле пытăмăр. Кунта пĕр сехет маларах çеç тăшман тарнă çулсене куртăмăр. Ку çулсем, нумай япала çинчен каласа парса, хăрушшăн курăнаççĕ. Тарăн юр кĕрчĕ çинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен шăнса хытнă виллисем выртаççĕ. Çакăнтах нимĕçсем пăрахса хăварнă йывăр тупăсемпе çăмăл тупăсем юр ăшне путса ларнă, унта та кунта патрон ещĕкĕсем, çĕмĕрнĕ минометсем, пулеметсем, мотоциклсем, велосипедсем сапаланса выртаççĕ. Эпир çавăнтах юсавлă машинăсенех пĕр вуннă ытла шутласа кăлартăмăр: вĕсен моторĕсем те ĕçлеççĕ, бакĕсене бензин тултарнă. Ку машинăсене, вĕсен кустăрмисем юр çине кĕрсе ларсанах, офицерсем пăраха-пăраха тарнă. Туртса кăларма вăхăт пулман. Аптăранă фашистсем е урапасем çине куçса ларнă, е суранах чупса тарнă.

Çавăнтах шоссе çулĕ çинче темĕн чухлĕ йĕлтĕр йăваланса выртать. Вĕсене нимĕçсен 162-мĕш пехотнăй дивизийĕн салтакĕсем пăрахса хăварнă. Çак дивизие Германи командованийĕ ятарласах хĕллехи условисенче ударнăй наступлени тума вĕрентсе хатĕрленĕ пулнă. Вĕсем валли Калинин хули çыннисенчен йĕлтĕрсем, çунасем тата ача-пăча çунашкисене те пурне те илсе кайнă пулнă. Нимĕç салтакĕсем хăйсен «ырăлăхлă фюрерĕнчен» «хĕллехи тумтир» — подшлемниксем илнĕ. Кунти фронта фашистсен спортсменĕсем нимĕç стрелокĕсене кашни кунах йĕлтĕрпе чупма, йĕлтĕрпе пынă çĕртенех пеме тата ыттине те вĕрентнĕ. Халĕ ĕнтĕ йĕлтĕрĕсем те кирлĕ пулман, вĕсене пăрахса хăварнă.

Купипе тытса илнĕ штаб документчĕсем хушшинчен эпир çак йĕлтĕрлĕ дивизине панă пĕр приказа тупрăмăр. Вăл приказра акă мĕн каланă:

«162-мĕш пехотнăй дивизири салтаксем! Фюрер приказĕ тăрăх ыран пирĕн çак çулталăкăн юлашки боевой заданине татмалла. Пирĕн умра тăшманăн танкĕсене хирĕç хĕллехи условисенче çапăçас йывăр ĕç тăрать. Пирĕн офицерсемпе салтаксем çак тапхăрта та, Сидра тата Птише патĕнче çапăçнă пекех, чаплăн çапăçма пултарассине эпĕ ĕненетĕп,« — тенĕ.

Малалла çав приказра дивизи епле наступлени тăвасси çинчен илĕртÿллĕн картинăласа кăтартнă:

«Тăшмана эпир флангран та, тылран та сасартăках атакăлатпăр, ăна çавăрса илсе пĕтерсе тăкатпăр. Сылтăмран тата сулахай енчен — пире пехотнăй дивизисем, фронтран — штурмовой орудисем, йывăр артиллерипе зенитнăй артиллери тата бомбардировщиксем пулăшаççĕ. Позицисене йышăнса илнĕ чухне нимĕн те чарăнса тăмалла мар, кашни танка тĕппипе пĕтерсе тăкмалла, çапла майпа малалла та малалла каяр! Мĕн чухлĕ хăвăртрах малалла çĕмĕрсе пырăпăр, пирĕн çитĕнÿсем те çавăн чухлĕ ытларах пулĕç, мĕн чухлĕ сахалрах юн тăкăнĕ, эпир хĕллехи канупа тивлетлĕн усă курасси те çавăн чухлĕ часрах çитĕ».

Приказ хавасланса кăшкăрса каланă сăмахпа вĕçленет:

«Салтаксем! Çак çапăçăва эпир хамăр вăйсене ĕненсе тата тăшманран малта тăнине хыттăн шанса кĕретпĕр».

Çак сăмахсем айне генерал-лейтенант Франке тесе алă пуснă. Чи çÿле Франке генералăн ярăнтарса çыракан аллипе: «Ноябрĕн 14-мĕшĕнче каçхине пур салтаксене те пĕлтермелле», тесе çырса хунă.

Мĕн каламалли ĕнтĕ — приказа пĕтĕм кăмăлпа хумхатакан сăмахсемпе çавăрса çырнă. Малалла та малалла! Эпир çавăрса илетпĕр те эпир пĕтеретпĕр! — тенĕ. Анчах та Калинин хули вăл Сидр тата Птише мар, Атăл та мар. Тепĕр уйăхран, нимĕçсен ытти нумай дивизийĕсем пĕтнĕ пекех, 162-мĕш дивизи те çĕр çийĕнчен пĕтĕмĕшпех шăлăнса тăкăнать.

Эпир 162-мĕш дивизин тыткăна лекнĕ салтакĕсемпе калаçса пăхрăмăр. Вĕсем Франке генерал приказне хăйсене мĕнле вуласа пани çинчен пĕлтерчĕç.

— Пире блиндажсем патне йĕркипе тăратса тухрĕç, — теççĕ вĕсем. — Обер-лейтенант Киммель приказа вуласа пачĕ те: «Эпир хамăрăн çак çулти юлашки боевой задачăна пурнăçлассине салтаксем пурте ăнланаççĕ-и?» тесе ыйтрĕ. Унăн ыйтуне хирĕç пĕри те чарламарĕç. Пире сивĕччĕ ун чухне. Эпир эрнипелех начар çиcе пурăннăччĕ. Малтанхи кунне лаша ашĕнчен пĕçернĕ шÿрпе çинĕччĕ; аш-какай запасĕ сахал пирки ăна офицерсем çеç çиетчĕç. Шÿрпере шăршă кĕрет, вăл пире лĕклентерсе тăрать. Обер-лейтенант, çиленсе çитсе, татах тепĕр хут ыйтрĕ. Вара, пирĕн рет çуммипе утса, пурне те куçсенчен пăхса тухрĕ. Çакăн хыççăн эпир тартăмăр, анчах пире тыткăна çавăрса илчĕç.

Çак хаяр сивĕпе кÿпчесе кайнă шурă сăмсаллă, тăмсай сăнлă çынсем çине пăхатăн та, вĕсен тăваткăл пуçĕсем йывăр шухăша кайнине туятăн. Мĕншĕн вăрçатăп-ши эпĕ? — текен хăй тĕллĕн суралнă шухăш вĕсен пуçĕсене вăрçă пуçланнăранпа та халĕ тин хускатнă пулĕ. Анчах кунта та вĕсем вăрă-хурахла шухăшлани палăрать. Ефрейтор Иозеф Мюллер, хăй сăмахĕсен айванлăхне ăнланмасăр, çапла каласа хурать:

— Францирен эпĕ кашни кун пекех киле паха посылкăсем яраттăм. Грецирен эпĕ ещĕкĕ-ещĕкĕпе виноград ярса параттăм. Халĕ ак Российăран çĕрсе кайнă сорочкăпа чĕркенĕ пыйтăсене çеç яма пултаратăп.

Çакна каланипе вăл йĕрĕнмелле эхĕрсе кулать. Тыткăна лекнĕшĕн вăл хавасах. Унăн хыçĕнче вуншар çунтарса янă ялсем; çĕршер çаратнă тата пусмăрланă çынсем тăраççĕ. Аллисем унăн юнпа вараланнă, куçĕсем кашкăрăнни пек пăхаççĕ, анчах та вăл, хăй юррине юрласа пĕтернĕ хĕрлĕ сухаллă бандит, çаплах-ха эхĕрет.

Хĕвеланăçнелле каякан çул çапаласа тăкнă нимĕç çарĕсен колоннисемпе капланнă. Вĕсем васкасах, часрах тарса хăтăласчĕ тесе, темиçе ретĕн чакаççĕ. Вăрçă пуçламĕшĕнче вĕсем Российăна килсе пĕтнĕ Наполеон похочĕ çинчен астутарсан, çăмăлçахăн мухтанса: «Пирĕн моторсем пур» тесе çеç таваратчĕç. Халĕ акă вĕсем ытлашши урапа тĕл пулсан та савăнаççĕ. Лаша çитмесен, вĕсем çуна туртма тыткăна лекнĕ красноармеецсене кÿлеççĕ. Бандитсем хăйсен урисене хĕрхенеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен татах та нумай тарма лекет-ха.

Çырма урлă каçмалли вырăнсенче тата çулсем пĕрлешнĕ çĕрте çĕршер урапа пĕр çĕре пухăнса кĕпĕрленет. Иртсе тухма çук капланса тăраççĕ. Çакăн пек самантсенче тÿпере пирĕн штурмовиксемпе истребительсем курăнса каяççĕ. Вĕсем каялла вĕççе кайнă хыççăн çĕршер фашист виллисем çаплипех урапасем çинче тата çул айккисенчи сулнăксенче выртса юлаççĕ.

Тарма çăмăл пултăр тесе, çав хурах-бандитсем пирĕн патра çаратса пухнă япаласене кăна мар, хăйсен пурлăхĕсене те, документ тултарнă ещĕкĕсене, тимĕр хĕреспе медальсем тултарнă ещĕкĕсене, япала йăтмалли ранецĕсене, противогазĕсене, винтовкисене тата ыттисене те пăраха-пăраха хăвараççĕ. Пĕр ялта тата нимĕç салтакĕсем хăйсен хĕçпăшалĕсене пусă шăтăкне тултарса хăварнă. Пĕр пусă шăтăкĕнчен пирĕн боецсем пилĕк миномет, тепринчен тата 5000 яхăн патрон тупса кăларнă.

Тепĕр ялта икĕ нимĕç салтакĕ вырăнти ял çыннисем умĕнчех хăйсен винтовкисене çапса çĕмĕрсе хăварнă.

— Капут! Вырăссем çĕнтереççĕ! — тесе кăшкăрнă çак нимĕç салтакĕсем, хăраса ÿкнипе урамра унталла та кунталла чупкаласа.

Икĕ уйăх çурă каярах кăна-ха, нимĕçсем Калинин хулине çĕмĕрсе кĕрсен, фашистсен «Фелькишер беобахтер» ятлă хаçачĕн корреспонденчĕ хăйсен хаçатĕнче савăнăçлăн кăшкăрашса çапла çырнăччĕ:

— Кунтан Мускава автомобильпе кайма шăп та шай виçĕ сехет çеç кирлĕ! — тенĕччĕ.

Халĕ ĕнтĕ çав Гитлер тăрантса ÿстернĕ корреспондент çакна шутласа пăхтăр: каялла, хăйсен килне урапапа таварăнма ăна мĕн чухлĕ вăхăт кирлĕ-ши? Анчах тата çитейĕ-ши унта вăл чĕрĕ пуçпала?

Л. ЛОСЬ.

Калинин фрончĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене пулăшма

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарас ĕç Ишлей районĕнчи Кибечкасси ялсоветне кĕрекен колхозниксемпе служащисем хушшинче ăнăçлăн пулса пырать.

Ку ялсоветĕнче лотерея билечĕсене 4110 тенкĕлĕх сарса 2000 тенкине çийĕнчех тÿленĕ.

Декабрĕн 25-мĕшĕнче Шупашкаркассинчи «Большевик» колхоз членĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура Çĕрпÿ районĕнчи Туçири «Цивильстрой» колхоз членĕсем пĕтĕм Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене тата ĕççыннисене чĕнсе каланине сÿтсе-яврĕç. Çавăн хыççăн колхозниксем пурте пĕр шухăш-кăмăлпа мухтавлă Хĕрлĕ Çар валли хăйсен хуçалăхĕсенчен пĕрер сурăх, хурсем тата ытти выльăхсем те самăртса пама пулчĕç. 62 çулти Н. Пайманов юлташăн икĕ ывăлĕ фашистла бандитсене хирĕç çапăçаççĕ. Пайманов юлташ хăйĕн хуçалăхĕнчен пĕр хур пама пулчĕ. Çавăн пекех колхоз хăй хуçалăхĕнчен 7 сысна, 20 чăх, 200 çăмарта парать.

А. ГРЕНДЕРОВ.

Заданине срокчен пурнăçланă

КАНАШ. Нумаях пулмасть ВРЗ-ри вагонсем тăвакан цехри Кузнецов комсомолецпа унăн юлташне васкавлă задани панă. Вĕсен вагон пайĕсене 74 сехетре вырнаçтарса лартмалла пулнă. Ку ĕç вĕсемшĕн çĕнĕ. Çапах çамрăк патриотсем ним хăрамасăрах ĕçе тытăннă. Ирхине 7 сехетрен пуçласа 4 сехетчен вагон пайĕсене вырнаçтарма ĕлкĕрнĕ. Юлташсем ук хыççăн та киле кайма шутламан, ĕçе вĕçне çитиччченех тума килĕшнĕ. Çапла вара вĕсем цехран тухмасăр ĕçленĕ, задание 74 сехет вырăнне 28 сехетре пурнăçланă, вагонăн 34 пайне вырнаçтарса лартнă.

Декабрĕн 23-мĕшĕнче Мускавра 1-мĕш гвардейски мотострелковăй дивизи 15 çул тултарнă. Ÿкерчĕкре: Мускаври 1-мĕш гвардейски мотострелковăй дивизин паллă çыннисем (сулахайран): политрук Л. Волков, старший лейтенант Б. Зайцев, красноармеец Н. Сутягин, красноармеец Ф. Гаврилов, старший лейтенант Г. Скворцов. Л. Великжанинпа Д. Черновăн фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Вырăс çанталăкĕ

Берлин радионе итлесен, нимĕçсем пурте метерологсем пулса тăнă тесе шутлама пулать. Кунти генералсем континентальнăй климатăн улшăнăвĕсене тĕпчесе аппаланаççĕ. Пропаганда министерстви температура епле улшăннине тĕпчесе ăнран каять. Хаçатсем, танксем çинчен манса, юр çуни çинчен çырса тăрмашаççĕ. Гитлеровецсем пурте пĕр сасăпа: «Эпир çанталăк сивĕ тăнă пирки вырăс хулисенчен туха-туха каятпăр», тесе ĕнентереççĕ.

Пĕр уйăх каярах кăна нимĕçсем пачах урăхла сухăрашатчĕç. Вĕсем Хĕл ятлă «генералран» тăрăхласа, пире нимĕнле сивĕсем те хăрушă мар, тесе каппаятчĕç. «Эпир Наполеон вăхăтĕнче мар пурăнатпăр», тетчĕç вĕсем. Ку çеç те мар-ха. «Танксемшĕн хĕлле кĕркуннехинчен темиçе хут та аванрах», тесе ăнлантарса паратчĕç вĕсем. «Манăн вырăс хĕлĕ çинчен калаçнисене илтсен, кулассăм çеç килет. Германи çарĕ çĕнтерÿллĕн малалла куçса пырассине нимĕн те тытса чарма пултараймасть», тенĕ Геббельс. Ахăртнех халь çав Геббельсăн пачах та кулас килмест пулĕ. Кукăр уралла Геббельсăн кулă шухăшĕ мар. Халĕ вăл та ыттисемпе пĕрле çапла сухăрашать: «Ах анчах, вырăс çанталăкĕ эпир палăртса хунă операцисене пурнăçа кĕртме пĕртте майлă пулмарĕ», тет.

Сăмах та çук, вырăс хĕлĕ—хаяр хĕл. Сахал мар нимĕç вăрă-хурахĕсем халĕ тăм илтернĕ пит-куçсемпе больницăсенче йăваланса выртаççĕ. Нимĕçсем каппайни, яланхи пекех, ахалех пулчĕ,— «Хĕл ятлă генерал» хăйĕнчен çапла тивĕççĕр тăрăхланишĕн нимĕçсене лайăхах тавăрчĕ. Çапах та, метерологипе витĕннинчен те усси çук: нимĕçсене хĕл сиввисем мар, пирĕн красноармеецсем çапса аркатрĕç. «Хĕл ятлă генерал» мар хăвалать нимĕçсене каялла, урăххисем—Рокоссовский, Говоров, Белов, Болдин, Мерецков, Федюнинский генералсем хăвалаççĕ. Хĕл—хăйне расна, вăрçă—хăйне расна.

Гитлер поражени тÿснине хăйĕн халăхĕнчен пытарма пултараймасть. Вăл пĕтĕм айăпа ĕнер çеç главнокомандующи пулнă фельдмаршал Браухич çине йăвантарать. Анман фельдмаршала, айăпа кĕнĕ прислугăна хуса кăларса янă пек, хăваласа кăларса ячĕç. Нимĕçсем кулăш сисĕмлĕхне çухатнă пулмалла, унсăрăн вĕсем, вырăнтан сирпĕтнĕ фельдмаршалăн юлашки послание вуланă хыççăн, кулса вилнĕ пулĕччĕç. Браухич: «Эпĕ чĕре чирĕпе чирленĕ пирки отставкăна тухатăп», тесе çырать. Шалт тĕлĕнмелле: вырăс çĕршывĕнчи шартлама сивĕсем нимĕçсене чĕре чирне яраççĕ иккен.

Çук, кунта сивĕ хĕл айăплă мар. Тăм илтернĕ кашни çĕр нимĕç пуçнепин нимĕç пуля тивсе вилнисем. Хĕл сиввисем мар çапăçса илнĕ Калинин хулине, Хĕрлĕ Çар çапăçса илнĕ. Хĕл сиввисене пула мар чĕре чирĕпе чирленĕ генерал Браухич, совет дивизийĕсен атакисем ăна чире янă.

Ытах та гитлеровецсем çаплах çанталăк айăплă теме пăхаççĕ пулсан, эпир вĕсене ку тĕлĕшрен те хăйсене лăплантарма чармăпăр. Вĕсене эпир тÿррипех калăпăр: чăн та çапла, пирĕн çанталăк нимĕç этеммишĕн майлăх мар. Пирĕн çулла шăрăх, хĕлле сивĕ, çуркунне юр каять, кĕркунне çумăр çăвать. Çак япала вăл, паллах, Берлинри çырусăсене пачах та килĕшмест. Кунсăр пуçне пирĕн Российăра лăпкă та тÿсĕмлĕ çынсем пурăнаççĕ. Вĕсем хĕл сиввисене те, çуллахи шăрăхсене те чăтса ирттерме хăнăхнă. Вĕсем геррсемпе фельдфебельсем умĕнче шавка йытă пек кайри ура çине чĕвен çÿреме юратмаççĕ, вĕсем вырăсла калаçма хăнăхнă, çавăнпа та вĕсем хăйсен тăлăпĕсемпе çăматтисене «чаплă арийецсене» хывса пама, паллах, кăмăл тăвас çук. Пирĕн çĕршывра паттăрлăхпа ирĕклĕх çанталăкĕ. Вăл çанталăкпа вырăс çыннисем чун-чĕрипех тăванлашнă. Пирĕн вырăс çанталăкĕ фельдмаршал Браухич шалçине çеç мар тултарнă. Вырăс çанталăкне пула тата çанталăка вырăс пульлисемпе минисем кăмăллăн пулăшса пынине пула, кашни кун пиншер нимĕç çыннисем вилсе пыраççĕ.

Мĕнпе чирлесе ÿкĕ-ши ĕнтĕ çĕнĕ главнокомандующи, ĕлĕк Тироль шпикĕ пулнă Гитлер, — кордитпа-и, е хăкăр тытамакĕпе-и? Ан тив, вăл хăйĕн «аслă пашшĕсен» кайзер Вильгельмпа Людендорф шăпи çинчен аса илтĕр. Халĕ нисăта та тарса ÿкме çук—голландецсем Роттердам ишĕлчĕкĕсемшĕн тавăрĕç; пĕтĕм тĕслĕ куçлăх та, хĕрарăм юбкипе пулăшаймĕ, ответ тытма тивет. «Европецсен вырăс хĕлĕ мĕн иккенне тавçăрма та пултараймасть»,—тесе ăнлантарса парать нимĕçсен штабĕ. Тĕрĕс, вырăс хĕлĕ пирки нимĕç çарĕн главнокомандующийĕ—чĕре чирĕпе, унăн салтакĕсем упа чирĕпе чирлеççĕ пулсан, паллах, ун пек хаяр хĕл çинчен тавçăрса илме хĕнтерех.

Илья ЭРЕНБУРГ.

—o—

Йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленеççĕ

ÇĔРПУ. Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа ирттерекен кросне хатĕрленес ĕçе ертсе пыма районра 7 çынтан оргкомитет тата судьясен коллегине тунă. Оргкомитет членĕсем пĕр хут пуçтарăнса канашлу туса ирттернĕ, кашнине обязанноçсем парса тухнă. Кроса хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе ВЛКСМ райкомĕн бюро членĕсене уйрăм ялсем çумне çирĕплетнĕ.

Г. ПЕТРОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПАРТИН ВĂРÇĂ ВĂХĂТĔНЧИ ÇИРĔП ДИСЦИПЛИНИШĔН

Коммунистсен парти дисциплинине пуринчен çӳлте тытса, ĕç дисциплинине тата государство дисциплинине ĕçпе çирĕплетсе пыракансем пулмалла.

Халĕ, отечественнăй аслă вăрçă пынă кунсенче, кашни коммунистăн парти организацийĕсен директивисемпе решенийĕсене калаçса тăмасăр, вăрçă вăхăтне тивĕçлĕн хăвăрт пурнăçа кĕртсе пымалла. Парти организацийĕсен дисциплини — вăрçă условийĕсенче чи малтан фронт заказĕсене хăвăрт пурнăçланинчен, производство планне ăнăçлăн тата ирттерсе тултарнинчен курăнса тăрать. Çакна хăшпĕр организацисенчи коммунистсем лайăх ăнланса илнĕ. Кăна вĕсем производствăра хăйсем лайăх ĕçленипе тата парти решенийĕсене хăвăрт пурнăçлама ĕççыннисене мобилизацилесе, хавхалантарса пынипе кăтартса параççĕ.

Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ типографири коммунистсем, Сталин юлташăн докладне рабочисене ăнлантарса парса, производствăн çулталăклăх планне срокчен тата ытлашшипе тултарма чĕнчĕç. Сталин юлташăн кăтартăвĕсем коммунистсен куллен тумалли ĕç планĕ пулса тăчĕ. Рабочисемпе работницăсем коммунистсен пуçарăвне йышăнса, хăйсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарчĕç. Цехсенче большевикла йĕркелĕх турĕç, кашни рабочи хăйĕн ĕçне нумай хут лайăхрах тума тытăнчĕ.

Лайăх организациленĕ ĕçĕн результачĕ те часах курăнчĕ. Типографи çулталăкри плана срокчен тата ытлашшипех пурнăçларĕ. Ĕç тухăçлăхĕ чылай ӳсрĕ, продукцин хăйне ларакан хакĕ те 10 процент ытла йӳнелчĕ.

Партин Милютински мехлеспунктри пуçламĕш организаци секретарĕн заместителĕ Н. Селезнев юлташ производствăра кăтартуллăн ĕçлесе пынипе пĕрлех партин политикăллă ăнлантару ĕçне те лайăх туса пырать. Вăл, всевобуч отрячĕн командирĕ пулса, хăйĕн отрядĕнчи боецсене çар ĕçне вĕрентессине лайăх организацилерĕ.

Эрех заводĕнче ĕçлекен çамрăк коммунистка Малышева юлташ производствăра икĕ çыншăн ĕçлесе пырать. Коллективри пур обществăллă ĕçе те вăл политикăллă пысăк активлăхпа хутшăнать. Парти организацийĕ хушнă ĕçсене яланах татăклăн тата хăвăрт пурнăçлама тăрăшать.

Нумаях пулмасть Малышева юлташа рабочисем хушшинче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе организацилеме хушнă. Малышева юлташ çак ĕçе лайăх пурнăçларĕ. Вăл пуçарнипех заводри рабочисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне çĕнĕ çул парнисем те ярса пачĕç.

Коммунистсем ĕçре малта пыраççĕ. Ĕç дисциплинине çирĕплетсе лайăх тĕслĕхсем кăтартаканнисем пулса тăраççĕ. Парти организацийĕсем тавра çирĕп актив пухăнса пырать. Активпа алла-аллăн çыхăнса ĕçлесе, парти организацийĕсем çĕнĕ çĕнтерӳсем тăваççĕ.

Парти хăйĕн членĕсене ĕçре тĕрĕслесе тăрать. Кашни коммунистăн парти организацийĕсен ĕçне активлăн хутшăнса ĕçлемелле. Парти организацийĕн поручениййĕсене хăвăрт тата тĕплĕн пурнăçласа пымалла.

Партин Государство банкĕнчи, Çĕр-ĕç халăх комиссариатĕнчи, «Заготживсырье» конторинчи пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсем организацин политикăллă ĕçĕпе оборона ĕçне кашни коммунистах явăçтарса, вĕсене тĕрлĕрен ĕçсем тума хушсах тăраççĕ. Парти организацийĕн поручениййĕсене кашни коммунистăн уйрăм пултарулăхне шута илсе параççĕ тата порученисене пурнăçланине тĕрĕслесех тăраççĕ.

Партин Çĕр-ĕç халăх комиссариатĕнчи организацийĕ Ягодкина юлташа сандружина организацилеме хушнă. Ягодкина юлташ çакна большевикла тимлĕхпе турĕ. Санитари ĕçне вĕрентессине организацилесе ГСО нормине пама 82 çынна вĕрентсе хатĕрлерĕ. 34 çынтан сандружина организациленĕ. Çак организацинчи коммунистсем парти организацийĕн поручениййĕсене хăвăрт пурнăçлаççĕ, пухусенче яланах ĕçе активлăн хутшăнаççĕ, член укçисене вăхăтра тӳлесе тăраççĕ.

Анчах партин хăшпĕр организацийĕсен секретарĕсемпе уйрăм коммунистсем Сталин юлташ кăтартнисенчен хăйсен ĕçĕнче çирĕп выводсем халĕ те туман-ха. Ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек çĕнетсе пыраймаççĕ, производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тума рабочисене начар ертсе пыраççĕ. Тир-сăран заводĕнче коммунистсен йышĕ пысăк. Анчах парти организацийĕ производствăри ĕçе пачах çителĕксĕр ертсе пырать. Кунта уйрăм коммунистсем производствăра кăтартуллăн ĕçлеççĕ пулсан та, вĕсен опытне рабочисем хушшинче сарман пирки завод уйăхран уйăха производство планне тултараймасăр пырать. Çавăн пекех макарон тăвакан фабрикăра та, çăкăр комбинатĕнче те тата ытти хăшпĕр учрежденисенче те коммунистсем производство планне тултарассишĕн çителĕклĕ таран ĕçлемеççĕ.

Нимĕç фашисчĕсен вăрă-хурахла çарĕсене Мускав патĕнче хăватлăн çĕмĕрсе тăкни, çав ирсĕр йыткĕтĕвĕсене пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар малалла çĕмĕрсе хăваласа пыни ĕççыннисене производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать, вĕсен политикăллă активлăхне вăйлăн хăпартать. Коммунистсем, Сталинăн тӳрĕ те ăслă сăмахĕсене халăх патне çитерсе тăракансем, ĕççыннисем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе тăваççĕ, хăйсем тавра партире тăман актива пĕтĕçтереççĕ. Çав активран чи лайăххисем парти ретне кĕреççĕ. Хăйне парти ĕçĕпе çыхăнтарса парти ретне кĕрекен кашни çын чи малтан парти дисциплинине куç шăрçине сыхланă пек сыхласа тăма сăмах парать.

Халĕ, тĕнчере хаяр вăрçă пынă вăхăтра, парти организацийĕсен дисциплинине уйрăмăнах çирĕп тытса тăмалла. Ăна çирĕплетнипе эпир мирлĕ вăхăтра хуçалăхпа промышленноçра пысăк çĕнтерӳсем турăмăр. Халĕ, çĕршыв ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн тăшмана хирĕç хаяр çапăçу пынă вăхăтра, парти дисциплини нихăçанхинчен те çирĕп пулмалла. Çакă вăл тăшмана çĕнтерес шанчăка çирĕплетет тата çĕнтерӳ тума пулăшаканĕ пулать.

А. НИКИТИНА.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн оргинструкторски отделĕн заведующийĕ.

Малта пыракан çамрăксене комсомол ретне

ОКТЯБРЬСКОЕ. Отечественнăй вăрçăн хаяр кунĕсенче районри малта пыракан çамрăксем чылайĕшĕ ленинла-сталинла комсомол ретне кĕчĕç. Хĕрлĕ Çар ретне кайма хатĕрленекенсем фронта кайнисем вырăнне тăрса предприятисемпе колхозсенче ĕçлекен çамрăксем тата вĕренекенсем нумайĕшĕ комсомол тавра пĕтĕçрĕç.

Октябрьски вăтам шкулта вĕренекен П. Шутин çак кунсенче хăйне комсомол ретне илме ыйтса заявлени панă. Вăл хăйĕн заявленийĕнче çапла çырнă: «Пирĕн çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăнă кунсенче çĕршывăн чăн-чăн патриочĕн ятне тивĕçлĕ пулас ĕмĕтпе татах та тăрăшса вĕренес, ĕçлес килет. Çав пархатарлă ĕмĕте пурнăçланă чухне ленинла-сталинла комсомол ретĕнче пулни чи чыслă ĕç тесе шутлатăп. Çавăнпа та мана ленинла-сталинла комсомол ретне илме ыйтатăп».

Юлашки кунсенче район центрĕнчи вăтам шкултан 3 вĕренекен, Шĕнер пуçĕнчи вăтам шкултан 10 вĕренекен комсомол ретне кĕнĕ.

Ф. НИК.

Фабрикăри комсомолецсен паха ĕçĕсем

ВĂРМАР. Спортинвентарь фабрикинчи рабочисемпе служащисем çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕç.

Ноябрĕн тата декабрь уйăхĕн малтанхи çур уйăх планне ытлашшипех тултарнă.

Фабрикăра двухсотниксен шучĕ ӳссех пырать. Стахановец Дмитриев юлташ нормăна 362 процент, Терентьева 272 процент, Герасимов 271 процент, Федоров 262 процент тултараççĕ. Ларионовăпа Е. Иванова стахановкăсем сменăра виçшер норма тултарса ĕçлеççĕ.

Фабрикăри комсомолецсем ĕçре пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Комсомолец-слесарь Михайлов юлташ кунне 4-шар норма тултарать. Александров, Финдюков, Андреева комсомолецсем те сменăри задание икçĕршер процентран кая мар тултараççĕ.

Комсомолецсем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарас тĕлĕшпе начар мар ĕçленĕ. Билетсене 10 пин тенкĕлĕх ытла сарнă.

«Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 1.732 тенкĕ укçа пухнă.

Комсомолецсем пурте ПВХО тата ГСО значокĕсен нормисене панă. Халĕ кросс хатĕрленес тĕлĕшпе йĕлтĕрпе тренировкăсем туса ирттереççĕ.

Т. КАРАСЕВА.

ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухрĕç

Куславккари 2-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕнче вĕренекенсен испытанисем пĕтрĕç. Испытанире пур ачасем те пулчĕç. Вĕсенчен 46,6 проценчĕ пысăк разрядсем илчĕç. 4-мĕш разряд илекенсем 33 процент, 5-мĕш разряд—15 процент, 2 çын 6-мĕш разряд илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Вĕренсе тухнисенчен çурри ытла аттестатсене «отлично» отметкăсемпе илчĕç. 30 çынна укçан преми панă.

Данилов, Андреев, Морозов вĕренекенсем практикăллă ĕçре нормăна 150—200 процент тултарчĕç.

Иккĕмĕш группăра вĕреннĕ Исачкин, Мадин, Александров, Егоров, Сидоров, юлташсем те нормăна ытлашшипех тултарса ĕçленĕ.

А. Васильев, Дмитриев, Смирнов, Никифоров комсомолецсем 5-мĕш разрядпа аттестат илчĕç.

Антон Белевич

ПАРТИЗАН ТУПА ТУНИ

Çапăçса мухтавлăн вилнĕ тусăн
Вилтăпри умне пыратăп та,
Хирсене лӳшкетнĕ хамăр юншăн
Тавăрмаваскать вăй кăкăрта.

Хаклă тусăн тăприне пĕр ывăç
Чăмăртатăп кăкăрăм çумне.
Тусăм, çывăр! Тусăм, канлĕ çывăр!
Мур тăшман пусаймĕ сан çине.

Сан юну хĕретнĕ чĕр тăпранăн
Татăкне çыртса, тупа туса
Ĕнентеретĕп: сакă вырăн санăн
Ĕмĕр-ĕмĕр пулĕ тап-таса.

Çĕршыва таптарĕ ирсĕр нимĕç,
Ĕмĕтсĕр карланкă, йĕрĕнчĕк.
Парăпăр ăна хăватлă хурçă çимĕç
Çамкинчен те çурăм хыçĕнчен.

Килчĕ нимĕç. Çӳлĕ тутă тулă
Ялкăшать, çунаççĕ суратсем.
Акă ӳкрĕ бомба. Канлĕ пулăр,
Çĕр хупланă пирĕн тăвансем!

Эх, тăван çĕршывăм, Белоруçĕм,
Куртăн эсĕ хурлăх, куртăн юн.
Куççулленчĕ пирĕн халăх куçĕ,
Тавăрма çĕкленчĕ çилли ун.

Нимĕç лашисем ĕçеççĕ халĕ
Ĕмĕрхи тăван çырма шывне.
Вăхăт çитĕ, белорус сухалĕ
Нимĕçрен тасалнă хăй çĕрне.

Вăхăт çитĕ, ирсĕр нимĕç мурĕп
Сарă шăммисем тухнисене
Курĕ белорус, пăхса лач сурĕ
Тутăхнă хĕресĕсем çине.

Тусăн вилтăпри çинче тăратăп,
Хамăн ывăçра ун тăприне
Чăмăртатăп та тупа тăватăп,
Шăхăрса чĕнетĕп туссене.

Йышăнтăр тăван çĕршыв вăрманĕ
Хăлат куçлă паттăр çынсене.
Çынçисен фашист-калта ăнланĕ
Сĕм хура вăрманăн йăлине.

Касăлать-и купăста кучанĕ.
Касăлать, çĕççе пырса лексен.
Касăпăр,—кучан пекех пăчланĕ
Вилĕ нимĕç, пĕтĕ нимĕç, çынçисен.

Белорус чĕлхинчен
Ухсай Яккăвĕ куçарнă.

Шупашкар районĕнчи «Хĕрлĕ ялав» колхоз районра чи малтан авăн çапса пĕтерне колхозсенчен пĕри. Ку ĕçре колхозри машиновед Федоров юлташ питĕ лайăх ĕçленĕ. Вăл сложнăй молотилкăна яланах юсавлă тытса, пĕлсе ĕçлеттернĕ. Колхоз Федоров юлташа 100 тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Укерчĕк çинче: «Хĕрлĕ ялав» колхозăн машиновечĕ, колхозник-стахановец Федоров юлташ.

В. ИВАНОВ фотоӳкерчĕкĕ.

1941 ÇУЛТИ ИТОГСЕМ

ЭЛĔК. М. Горький ячĕпе тăракан колхозра сортлă вăрлăх участока 1937 çулта организациленĕ. Халĕ вăл Чăваш республикинче чылай колхозсене сортлă вăрлăх парса тăрать.

1941 çулта сортлă вăрлăх участокĕ çинче уйрăмах пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ. План тăрăх кашни гектартан 15 центнер тырă туса илмелле пулнă пулсан, 1941 çулта участокран вăтам шутпа кашни гектар пуçне тулă — 37 центнер туса илнĕ, ыраш — 32 центнер, сĕлĕ — 27 центнер пухса кĕртнĕ. Вăйлă тырă туса илнĕшĕн ĕçшĕн хушса тӳлес йĕрке тăрăх участокра ĕçленĕ колхозниксене 6 пин ĕçкунĕ хушса панă. Колхозник П. Антонов 2 тонна тĕштырă илмелле.

Сортлă вăрлăх участокĕ колхоза пысăк тупăш парать. Вăл 1938-мĕш çултанпа колхоза 1.400 центнер тĕштырă, вăл шутран иртнĕ çулта сĕлĕ — 255 центнер, тулă — 203 центнер, ыраш—169 центнер панă.

Çĕнĕ çулта сортлă вăрлăх участокĕнче тырăсен тухăçне татах хăпартма палăртнă. Халĕ бригадăсем участока çуркуннене хатĕрлеççĕ, ялхуçалăх машинисене юсама тытăнчĕç. Участоксем çинче юр тытса хăварнă тата навоз кăларнă. Участокăн заведующийĕ Никитин юлташ хăйĕн ĕçне юратса тăвать.

А. АФАНАСЬЕВ, И. СМИРНОВ.

Вăйлă тырпул туса илме тăрăшнă çерте

ЕТĔРНЕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçпĕн хушса тӳлесси çинчен кăларнă постановлени вăйлă тырпул туса илессинче тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерессинче колхозсене пысăк усă парать. Акă, Чурпайри Киров юлташ ячĕпе тăракан колхоз вăтам шутпа кашни гектартан планпа пăхнинчен 1,2 центнер ытла тĕштырă туса илнĕ. Камашри «Пионер» колхозри В. Константинов бригади кашни гектартан планран ирттерсе 1,3 центнер тырă туса илнĕ. Вăйлă тырпул илнĕ колхозсем татах та пур.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана ытлашшипех тултаракан колхозсен йышĕ ӳссе пырать. Мăн Шемертенри «Заветы Ленина» колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана пур енчен те ытлашшипех пурнăçланă. Мăйракаллă шултра выльăхсене ĕрчетес плана 125 проц., сысна ĕрчетессине—225 процент, сурăх ĕрчетессине 131 процент ĕçе кĕртнĕ. Кайăк-кĕшĕк фермине кăçал анчах организациленĕ. Кунта та çулталăкăн 3-мĕш кварталĕнчех плана 150 процент таран пурнăçланă.

Ку колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси ăнăçлăн пулса пыни фермăсене ертсе пыракан Мареев юлташ тăрăшса ĕçленинчен те нумай килчĕ. Вăл çĕнĕ закона тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырса, фермăри работниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарнă.

Çĕнĕ Етĕрнери «Комсомол» колхоз та фермăсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана тултарчĕ. Обществăллă выльăх-чĕрлĕхсен шучĕ ӳснĕ май вĕсен продуктивноçĕ те ӳсет. «Пионер» колхозри сĕт-çу ферми 1940 çулта кашни ĕнерен вăтам шутпа 1622 литр сĕт суна пулсан, кăçал 9 уйăх хушшинчех вăтам шутпа кашни ĕнерен 1700 литр сĕт суса илнĕ. Ферма сĕт суса илес плана сентябрĕн 1-мĕшĕнчех пурнăçа кĕртнĕ. «Комсомол», «Сура», «Правда», «Комбинат» колхозсенче сĕт сăвас плана иртнĕ çулхинчен ирттерсе пурнăçланă.

Калинин ячĕпе тăракан колхозри дояркă Е. Шмарина юлташ хăйне çирĕплетсе панă ĕнесенчен 3400 литр сĕт суса илнĕ. Çавăн пекех К. Дербенева юлташ та 3580 литр, Никифорова—5000 литр суса илнĕ. Çĕнĕ закон тăрăх вĕсем 450—500-шер литр сĕт илеççĕ, Никифорова—700 литр илет.

Çавнашкалах «Правда» колхозри дояркăсем Александровăпа Андреева юлташсем те ĕçпĕн хушса тӳлес йĕрке тăрăх 332-шер литр сĕт илеççĕ. «Заветы Ленина» колхозра Комарова юлташ планран ирттерсе 16 сысна çури пăхса çитĕнтерне. Çавăншăн вăл çĕнĕ закон тăрăх 4 сысна çури илет. Çапла вара çĕнĕ закон колхозсене вăйлă тырпул туса илме тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерме пулăшать тата куншăн лайăхрах ĕçleме хушать.

Я. СОРОКИН.

Выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн продуктивноçне ӳстерер

ÇĔРПУ. Выльăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçарассинче ăшă витесем туни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хĕллене хатĕрленсе, колхозсем кĕр пуçламĕшĕнчех выльăхсене тăратма витесем турĕç, кивĕ витесен шăтăк-çурăкĕсене питĕрчĕç.

Ку тĕлĕшпе «Молодая сила» колхоз уйрăмах тимлĕн ĕçлерĕ. Фермăра ĕçлекен колхозниксем кĕр пуçлансанах выльăх витисене пăхса тухса шăтăк-çурăксене тăмпа шăлса лартрĕç, выльăхсем тăмалли вырăнсене юсарĕç, вите чӳречисен кантăкĕсене ферма заведующийĕ Г. Синяков юлташ хăй лартрĕ. Халĕ колхоз выльăхĕсем ăшă витесенче усранаççĕ. Çулсерен çакăн пек тăрăшса ĕçленине пула, ку колхозра выльăх чĕрлĕхĕн продуктивноçĕ ӳссех пырать. 1940 çулта кашни ĕнерен вăтам шутпа 625 литр сĕт суса илнĕ пулсан, кăçал 11 уйăх хушшинчех кашни ĕне пуçне 1033 литр сĕт суса илчĕç. Иртнĕ çул сысна амисенчен 14-шер çăвăр илнĕ пулсен, кăçак 18-шар çăвăр ӳстерчĕç.

1940 çулта колхоз сурăх ферми организацилерĕ. Фермăра ĕçлекен кашни работник тăрăшса ĕçленипе 1941 çулта кашни 100 сурăх пуçне 210 путек ӳстернĕ.

Выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерес, вĕсен продуктивноçне хăпартас тĕлĕшпе «Луч», «Чуваш. ЦИК», «Новая жизнь» колхозсем аван ĕçлеççĕ. «Чуваш ЦИК» колхоз кăçал 40 пуç ĕне тата 200 чăх вырнаçмалăх çĕнĕ витесем туса лартрĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракан колхозсемпе пĕрлех районра ку ĕçе япăх туса пыракан колхозсем те пур-ха. «Красный пахарь» колхоз паянхи куна çитсе те пĕр вите те юсаман, выльăхсене çил кĕрекен сивĕ витесенче тăратаççĕ. «Канаш» колхоз та ĕнесемпе лашасене сивĕ витесенчех усрать. Çавăнпа ку колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç ăнăçлă пулса пымасть. Çамрăк выльăхсем вилнисем пулаççĕ, выльăх-чĕрлĕх продуктивноçĕ начар.

«Красный путиловец», «Красный Октябрь» колхозсенче лашасене, ĕнесене тата сурăхсене апата сивĕ çанталăкра та килкартине, юр çине пăрахса çитереççĕ. Выльăх апатне усăсăр тăккаласа пĕтереççĕ, выльăхсем кунĕпех тулта, сивĕ çĕрте çӳреççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх витисене юсаман, вĕсене сивĕ çилтен хӳтĕлемен колхозсен халех витесене юсаса ăшăтмалла. Выльăхсене хĕллехи сивĕ кунсенче ăшă витесенче усраса, вĕсен продуктивноçне ӳстерме тăрăшăр.

В. ИГНАТЬЕВ.

МАЛТА ПЫРАКАН АГИТКОЛЛЕКТИВСЕМПЕ ХАСТАРЛĂ АГИТАТОРСЕМ

Партин Шупашкар райкомĕ юлашки вăхăтра агитколлективсене конкретнăрах ертсе пыма пуçларĕ. Агитколлектив руководителĕсемпе кашни уйăхрах 2—3 хутран кая мар семинарсем туса ирттерет. Декабрь уйăхĕнче икĕ семинар ирттернĕ. Малтанхи семинарта: «Камсем вĕсем национал-социалистсем» темăпа, юлашкинчен — «Фашизма хирĕç организациленнĕ ССР Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен коалицийĕ» темăпа инструктивнăй докладсем туса панă.

Райком секретарĕсем малтанхи вăхăтсенче докладсемпе сахал тухнă пулсан, хальхи вăхăтра семинарсенчи инструктивнăй докладсенчен нумайĕшне райком секретарĕсем туса параççĕ.

Агитколлектив руководителĕсем районри семинарсенче пулнă хыççăн вырăнти агитаторсен канашлăвĕсене туса ирттереççĕ.

Парти райкомĕ ертсе пынине пула, нумай агитколлективсем аван ĕçлеççĕ. Илĕпĕр Иккассинчи агитколлектива. Агитколлектив план тăрăх ĕçлесе тăрать. Унта пурĕ 22 агитатор. Ку шутран нумайĕшĕ ялти интеллигентсем. Агитаторсем хăйсене çирĕплетсе панă участоксемпе колхоз бригадисенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Агиколлектив руководителĕ Петрова юлташ — хăй тăрăшса ĕçленипе ытти агитаторсене пример кăтартса парать; вăрçă пуçланнăранпа вăл хăй кăна 8 доклад туса панă, çакăнпа пĕрлех ытти агитаторсене докладсем, лекцисем, калаçусем туса ирттерме пулăшать, агитаторсем валли кирлĕ литературăна илсе тăрать. Унăн коллективĕнче А. Григорьева, Тавинов, Черкасова учительсем пикенсе ĕçлеççĕ. Вĕсем тăрăшнипе укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене пĕр Иккасси ялĕнчех 4000 тенкĕлĕх сарнă. Пĕтĕм ялсовечĕпе лотерея билечĕсене 10 пин тенкĕлĕх ытла вырнаçтарнă. Черкасова юлташ, кашни кунах конюхсем патне тата фермăри выльăх-чĕрлĕх пăхакансем патне кайса, хаçатсем вуласа парать. ВКП(б) членĕн кандидачĕ, госсортоучасток агрономĕ С. Григорьев юлташ колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçсене туса тăрать, çак хушăрах колхозниксене ялхуçалăх агротехникин ĕçĕсемпе паллаштарать. Иккасси колхозĕ агротехника правилисене пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшать. Çакна пула вăл юлашки çулсенче уйхиртен вăйлă тырпул илсе тăчĕ. 1940 çулта ĕçкунĕ пуçне 6-шар килограмм тĕштырă валеçрĕ. Кăçал та унран кая пулмасть.

Агитаторсем тимлĕн ĕçленине пула Иккассинчи «Майăн 1-мĕш» колхоз хăйĕн ĕçĕсене вăхăтра тата тĕплĕн туса пырать: уй ĕçĕсене йĕркеллĕн вĕçлет, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татать, политикăллă кампанисене активлăн хутшăнать.

Агитколлективра колхоз активисчĕсем те аван ĕçлесе хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ. «Революци ялавĕ» колхоз председателĕ Мышкин юлташ колхозниксем хушшинче кулленех агитмассăллă ĕçсене туса тăрать. Вăл ертсе пыракан колхоз октябрь уйăхĕнчех авăн çапса пĕтерсе государство умĕнчи пур парăмсене те парса татрĕ. Мышкин юлташ укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене колхозниксем хушшинче икĕ кунра 3000 тенкĕлĕх ытла сарса, укçине те çав кунсенчех пухса хыврĕ.

Коллективра активлăн ĕçлекен агитаторсен шутне тата Ф. Павлов юлташа кĕртмелле. Павлов юлташ — «Броневик» колхоз председателĕ. Вăл та Мышкин юлташран юлмасть, тăрăшса ĕçлет.

Агитколлектив пикенсе ĕçленине кура, Иккасси ялсоветне кĕрекен колхозсем государствăна памалли парăмсене пурне те тахçанах парса татрĕç, оборона фондне ялхуçалăх продукчĕсем нумай хыврĕç, Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пуçтарса пачĕç. Хĕрлĕ Çар Мускав патĕнче фашистсене çапса аркатни çинчен агитаторсем вуласа панине итленĕ хыççăн Иккассинчи «Майăн 1-мĕш» колхоз колхозникĕсем оборона фондне татах 200 центнер тырă, 12 центнер аш-какай пама пулчĕç, çавăнпа пĕрлех вĕсем пĕтĕм районри ытти колхозниксене те хăйсем пек тума чĕнчĕç. Районри нумай колхозсем, «Майăн 1-мĕш» колхоз колхозникĕсен чĕнĕвне ответлесе, оборона фондне тырă, аш-какай, çу тата ытти продуктсем парас ĕçе вăйлатрĕç.

Шĕнерпуçĕнчи агитколлектива РСФСР-ĕн тава тивĕçлĕ учителĕ К. Афанасьев юлташ ертсе пырать. Афанасьев юлташ вăрçă пуçланнăранпа хăй кăна 11 доклад туса панă. Афанасьев юлташ коллективĕнчи агитаторсенчен чи малтан Т. Иванов юлташа кăтартма пулать. Иванов юлташ — «Çиçĕм» колхоз председателĕ, ВКП(б) членĕн кандидачĕ. Вăл ертсе пыракан колхоз уй ĕçĕсене районра чи малтан пĕтерчĕ тата государство умĕнчи парăмсене тахçанах парса татрĕ. Иванов юлташ Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене колхозниксем хушшинче кашни . каçах — малтан колхоз правленинче, унтан вулав çуртĕнче вуласа парать, вуланă хыççăн ăнлантарулла калаçусем туса ирттерет. Çавăн пекех вăл . конюхсем патĕнче, колхоз ферминче тата арманта ĕçлекенсем патĕнче пулса хаçатсем вуласа парать, политикăллă калаçусем туса ирттерет. «Çиçĕм» колхоз оборона фондне малтан 30 центнер тырă панăччĕ; халĕ татах 50 центнер тырă, 5 центнер аш-какай, 30 чăх тата çу пама йышăннă. «Цивильстрой» колхоз колхозникĕсем чĕнсе каланине сӳтсе явнă хыççăн колхозри 28 хуçалăх Хĕрлĕ Çара тĕрлĕрен выльăх-чĕрлĕх ӳстерсе пама обязательство илчĕç. «Çиçĕм» колхоз пысăк мар, апла пулин те унта лотерея билечĕсене 3.800 тенкĕлĕх сарчĕç. Иванов юлташ хăй 250 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çавăнтах тӳлесе татрĕ.

Шĕнерпуç агитколлективĕнче тăракан «Кормилец» колхоз председателĕ А. Иванов та политикăллă-массăллă ĕçсене пултаруллăн туса пырать. «Кормилец» колхоз «Çиçĕм» колхозпа ăмăртать. Ку ăмăртура вăл «Çиçĕм» колхозран юлмасăр пыма тăрăшать.

Çĕньялти агитколлектив та тăрăшса ĕçлет. Коллектива орденоносец-учитель, парти членĕ Войнов юлташ ертсе пырать. Войнов юлташ пуçарнипе Çĕньялта фронт çывăхĕнчи хуласемпе ялсенчен куçса килнĕ ачасем валли, çавăн пекех тата Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтир пухас ĕçе организацилерĕç. Вăл тăрăшнипех Хĕрлĕ Çара кайнă çынсен çемьисене пулăшса тăма 6—7-мĕш классенче вĕренекен ачасем «Тимур командине» организацилерĕç. Команда хăйĕн ĕçĕсене хастарлăн туса пырать.

Анчах лайăх ĕçлекенсем хушшинчех сӳрĕккĕн ĕçлекен агитколлективсем те пур. Илĕпĕр Соляновăри коллектива. Коллективра учительсем те, колхозпа совет ĕçĕнчи активистсем те тăраççĕ. Анчах та ку коллектив колхозниксем хушшинче нимĕнле массăллă ĕç те тумасть. Агитколлектив руководителĕ Чечнев юлташ агитаторсене ертсе пырас тĕлĕшпе япăх ĕçлет. Çакăн майлах Чемуршари агитколлектив та. Анчах та, каламалла, ун пек начар ĕçлекен коллективсем нумай мар. Пирĕн ялти интеллигенцин чи пысăк йышĕ, хальхи ответлă задачăсене лайăх ăнланса, партипе совет правительстви хушакан ĕçсене чĕререн туса тăрать. Вăл мĕнпур ăсне, мĕнпур вăйне тăван çĕршыва çирĕплетес çĕре хурса, хамăра пăвма шутлакан тискер тăшмансен çарне часрах çапса аркатма пулăшать.

А. ТИМОФЕЕВ.

ВКП(б) Шупашкар райкомĕн агитаципе пропаганда отделĕн заведующийĕ.

Мастерскойри стахановецсем

Тул çутăлнă-çутăлманах комсомольски МТС-и килкартинче двигатель тук-тук-тук. тутарса ĕçлеме тытăнать. Машинăсемпе тракторсем юсакан мастерскоя чăн малтан яланах механик П. Кудрявцев пырать. Ун хыççăн часах трактористсем, токарьсем, слесарьсем, тимĕрçĕсем тата ыттисем те пухăнаççĕ. Вара хĕрӳ ĕç пуçланать.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçлансанах машинно-тракторнăй станци хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕн çĕнетсе лайăхлатрĕ. Хальхи вăхăтра ялхуçалăх машинисене юсама тытăннă. Ĕç вăрçă вăхăтне тивĕçлĕн хăвăрт пулса пырать.

МТС ноябрь уйăхĕнче юсамалли тракторсене вăхăтра юсаса хатĕрленĕ. Аслă механик П. Кудрявцев пуçарнипе рабочисем хăйсен ирĕкĕпе талăкне 16-шар сехет ĕçлеме тытăнчĕç. Токарь В. Жирнов юлташ тата слесарь Левин юлташ ĕç нормине 120—150 процент тултарса пыраççĕ. Халĕ çеç курсран вĕренсе тухнă Т. Наумов токарь те ĕç нормине тултарса ĕçлет. Механик Кудрявцев хăй кашни кун кăтартуллăн ĕçлет. Вăл пуçарнипе мастерскойра кăмакасем тутарчĕç. Халĕ рабочисем ăшă çĕрте ĕçлесе ĕç тухăçлăхне татах хăпартрĕç. Тракторсем юсас тĕлĕшпе бригадăсем ăмăртса ĕçлеççĕ.

В. ВИКТОРОВ.

Вашингтонра çирĕм ултă государствăн декларацине алă пусса çирĕплетни

1942 çулти январĕн 1-мĕшĕнче Вашингтонра, Шурă Çуртра, çирĕм ултă государствăн пĕтĕмĕшлĕ декларацине алă пусса çирĕплетнĕ.

Аяларах эпир çак декларацин текстне пĕтĕмĕшпех пичетлетпĕр:

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШУЛЛĔ ШТАТСЕН, ВЕЛИКОБРИТАНИПЕ ÇУРÇĔР ИРЛАНДИН ПĔРЛЕШТЕРНĔ КОРОЛЕВСТВИН, СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ РЕСПУБЛИКĂСЕН СОЮЗĔН, КИТАЙĂН, АВСТРАЛИН, БЕЛЬГИН, ИНДИН, КАНАДĂН, КОСТА-РИКĂН, КУБĂН, ЛЮКСЕМБУРГĂН, ЧЕХОСЛОВАКИН, ДОМИНИКАН РЕСПУБЛИКИН, ЭЛЬ-САЛЬВАДОРĂН, ГРЕЦИН, ГВАТЕМАЛĂН, ГАИТИН, ГОНДУРАСĂН, ГОЛЛАНДИН, ÇĔНĔ ЗЕЛАНДИН, НИКАРАГУĂН, НОРВЕГИН, ПАНАМĂН, ПОЛЬШĂН, КĂНТĂР АФРИКА СОЮЗĔН ТАТА ЮГОСЛАВИН ПĔТĔМĔШЛĔ ДЕКЛАРАЦИЙĔ.

Çакна алă пуснă правительствăсем, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ тата Великобритани премьерĕ 1941 çулти августăн 14-мĕшĕнче Атлантика хартийĕ ятпа паллă пулса тăракан пĕтĕмĕшлĕ декларацире пĕтĕçтерсе каланă тĕллевсемпе принципсен пĕтĕмĕшлĕ программи çумне малтанах пĕрлешнĕскерсем,

тăшмана пуçĕпех çĕнтерни пурнăçа, ирĕклĕхе, тĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлеме кирлине, тата хăйсен çĕршывĕсенче те, çавнашкалах ытти çĕршывсенче те этемлĕхĕн прависемпе тивĕçлĕхĕсене сыхласа хăварма кирлине, тата вĕсем пурте тĕнчене пусмăрлама тăрăшакан тискер вăйсене хирĕç пĕрлĕхлĕ кĕрешӳве хутшăннине ăнланса илнĕскерсем, çапла пĕлтерессĕ:

1) Пакт туса пĕрлешнĕ висĕ государствăн членĕсене хирĕç тата çав пакт çумне пĕрлешнĕ ытти çĕршывсене хирĕç туса пыракан вăрçăра кашни правительство хăйĕн çарĕн тата экономикин мĕнпур ресурсĕсене ĕçе кĕртме сăмах парать.

2) Кашни правительство çак декларации çине алă пуснă правительствăсемпе сыхăнса ĕçлесси çинчен тата тăшмансемпе сепаратнăй перемири е мир тумалла марри çинчен сăмах парать.

Çӳлерех кăтартса панă декларации çумне гитлеризма çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешӳре материальнăй пулăшу паракан е пама пултаракан ытти нацисем те пĕрлешме пултарассĕ.

* * *

ВАШИНГТОН, январĕн 1-мĕш. (ТАСС). 26 государствăн декларацийĕ çине Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен — Рузвельт, Великобританирен — Черчилль, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕнчен — Литвинов, Китай республикинчен — Сун-Цзы-Вень алă пуснă.

Англипе Америка çар совечĕн ларăвĕ

ЛОНДОН, январĕн 2-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельтпа Черчилль ĕнер Англипе Америка çар совечĕн ларăвĕнче пулнă. Пĕлсе тăракан çынсем каланă тăрăх, ларура вăрçă планĕсене малалла сӳтсе-явнă тата вăрçăн мĕнпур фрончĕсенчи положенипе паллашнă.

Ирĕке кăларнă хулара çĕнĕ çула кĕтсе илни

Калининри хула Совечĕн исполком председателĕпе В. М. Горбуновăпа калаçни

Гитлеровецсем пирĕн хулара çĕнĕ çула уявласа ирттерме хатĕрленнĕ. Вĕсем магазинсене çаратса тухнă та ертăна илемлетмелли япаласене хăйсен казармисем тăрăх малтанах турттарса çӳренĕ. Анчах ĕç тухмарĕ! Фашистсене пирĕн тăван хуларан чылай аякка хăваласа ярас тесе, çĕнĕ çул умĕн Хĕрлĕ Çар тăрăшса кĕрешрĕ. Гитлерла молодчиксем мар, советăн çĕршер ачисем ĕнер Хĕрлĕ Çар Çуртне елка ирттерме пухăнчĕç, çавăн пекех вĕсем «Звезда» кинотеатра, «Пролетарка» фабрикăн клубне те пухăнчĕç. Çĕнелсе урăхланнă пĕтĕм хула çĕнĕ çула савăнăçлăн кĕтсе илчĕ.

Паян учрежденисем нумайĕшĕ ĕçлеме тытăнчĕç, фашистсем аркатса хăварнă хула хуçалăхĕ ура çине тăма тытăнчĕ. Почта, телеграф тата телефон станцийĕ ĕçлессĕ. Тăхăнмалли япаласене тата кил тавраш̆ĕнчи хатĕрсене юсамалли темиçе мастерской, парикмахерскисене, мунчана çĕнĕ çул тĕлне ĕçе янă. Хулан тĕрлĕ районĕсенче çăкăр сутакан 15 магазина тата промтаварсем сутакан пĕр магазина уçнă.

Аркатса тăкнă промышленноçа тата хула хуçалăхне йĕркене кĕртес тĕлĕшпе хулара пурăнакансем пурте пысăк пуçарулăхпа ĕçлессĕ. Вĕсем хваттерсемпе шкулсене юсассĕ, сулйĕрсене тасатассĕ, трамвайсене юсаса ĕçе ярассĕ, хăшпĕр фабрикăсене ĕçе яма хатĕрлессĕ, тăшмана ăнăçлăн çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшассĕ. Нумай вăхăт иртмĕ, фашистла вăрă-хуракансенчен ирĕке кăларнă пирĕн хула советла тулли пурнăçпа пурăнма тытăнĕ.

КАЛИНИН, январĕн 2-мĕш. (ТАСС).

Ютçĕршыв хроники

● Мексика сеначĕ, пĕр саслăн пулса, Америкăри кирек хăш государствăн хĕçпăшаллă вăйĕсем те Мексика территорийĕпе тата унăн порчĕсемпе усă курма пултарни çинчен калакан декрета ырланă.

● Сальвадор правительстви çапла пĕлтернĕ: Сальвадор правительстви тĕнĕлри державăсене хирĕç кĕрешекен кирек хăш çĕршывăн карапĕсене те хăйĕн порчĕсенче горючи пама хатĕр. Правительство çĕршыв çине сывлăшран килсе тапăнассинчен сыхланма кирлĕ мерăсене йышăннă.

Çамрăксем валли передача

Январĕн 2-мĕшĕнче, ирхине 7 сехет те 20 минутăра, Чăвашсен радиостанцийĕ урлă «Сталин юлташ чĕнсе каланни çине комсомолецсемпе çамрăксем ĕçпе ответлессĕ» темăпа çамрăксем валли ятарласа передача пулса иртрĕ. Унта ВЛКСМ Чăваш обкомĕн секретарĕ Л. Михайлов, эрех заводĕнчи стахановка Захарова, Ленин ячĕпе тăракан фабрикăн директорĕ Бучельникова юлташсем, Шупашкарти 2-мĕш №-лĕ шкулта вĕренекен Галя Владимирова тухса каларĕç.

Хальхи вăхăтри питех те кирлĕ ĕçе тĕплĕн туса çитерер

Пĕтĕм халăха тăшман сывлăшран килсе тапăннинчен тата химилле тапăнуран сыхланма вĕрентесси — вăрçă вăхăтĕнчи чи кирлĕ задачăсенчен пĕри. Çак пысăк та ответлă задачăна осоавиахим организацийĕсем çине хунă. Осоавиахим ку тĕлĕшпе паллă ĕçсемех турĕ. Халăха вĕрентме инструкторсем нумай кирлĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа пирĕн республикăра темиçе çĕршер çынна инструкторсен курсĕнчен вĕрентсе кăларнă, темиçе çĕршер çын хальхи вăхăтра курсра вĕренессĕ. Нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан вăрçă вăхăтĕнче темиçе пиншер çын ПВХО значокĕсене илнĕ. Ку тĕлĕшпе халĕ те нумай кружоксем ĕçлессĕ, çав кружоксенче татах та темиçе пиншер çын вĕренет.

Халăха тăшман сывлăшран килсе тапăннинчен тата химилле тапăнуран сыхланма вĕрентес тĕлĕшпе чылай инструкторсем тăрăшса ĕçлессĕ. Уйрăмах ку тĕлĕшпе инструктор Сапожников юлташ (Чăвашглавлит) лайăх ĕçленине палăртмалла. Вăл, хăй ПВХО инструкторĕсен курсĕнчен вĕренсе тухнăскер, пĕрремĕш ступеньлĕ значкистсене — 130 çынна, иккĕмĕш ступеньлĕ значкистсене 12 çынна вĕрентсе кăларнă. Филиппов юлташ (милици управленийĕ) 62 çынна вĕрентсе хатĕрленĕ.

Финанспа банк работникĕсен Союзĕн обкомĕнче ĕçлекен Калиновская юлташ инструкторсен курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн пĕрремĕш ступеньлĕ значкистсене 27 çынна вĕрентсе кăларнă. Вăл халĕ черетлĕ призыва ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие активлăн пулăшать, хула военкомачĕ çумĕнчи призывниксем хушшинче значкистсен йышне ӳстерессишĕн тăрăшса ĕçлет.

Инструкторсен курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн обществăллă ĕçе активлăн хутшăнман юлташсем те пурха. Кузьминская, Ермолаев (Горисполком) тата хăшпĕр ытти юлташсем те паянхи куна çитсе те значкистсем хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнман.

Шупашкар хулинчи партин пуçламĕш организацийĕсем чылайĕшĕсем хăйсен коллективĕсене тăшман сывлăшран килсе тапăннинчен тата химилле тапăнуран сыхланма вĕрентес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленине палăртмалла. Акă наркомторгра ĕçлекенсем пурте ПВХО значокĕн пĕрремĕш ступеньлĕ нормисене пачĕç, работниксенчен икĕ çын инструкторсем пулса ĕçлессĕ. Самозащита группи 40 сехетлĕ программăпа хăйĕн занятийĕсене вĕçлерĕ, сутта маскировка тăвас ĕçе те лайăх йĕркеленĕ. Пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Лебедева юлташ хăй инструктор-общественник пулса ĕçлет. ПВХО значокĕн нормисене йышăнакан комиссие тата ытти ĕçсене активлăн хутшăнать.

Сыхăну конторинче ĕçлекенсенчен 242 çын ПВХО значокĕн пĕрремĕш ступеньлĕ нормисене панă. Кунта та самозащита группи лайăх ĕçлет. Конторăра ĕçлекен кашни работникăх «Сывлăшри тревога» вăхăтĕнче хăй мĕн тумаллине пĕлет. ПВХО инструкторĕсене 6 çын вĕрентсе хатĕрленĕ. Çутта маскировка тăвас ĕçе лайăх йĕркеленĕ.

Çавăн пекех, сывлăшран килсе тапăннинчен тата химилле тапăнуран сыхланас ĕçе Милютински мехлесопунктра, хулари милици управленийĕнче, çутĕç халăх комиссариатĕнче, çулйĕр управленийĕнче, Главлитра т. ыт. çĕрте те лайăх туса пырассĕ. Асăннă учрежденисенче парти тата осоавиахим организацийĕсем ку тĕлĕшпе кулленех тăрăшса ĕçлессĕ.

Калас пулать, хулари сахал мар предприятисемпе учрежденисенче сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланас ĕçе тивĕçлипе йĕркелеймен-ха. Вĕсен шутне тир-сăран комбиначĕ, кирпĕч завочĕ, военторг тата чăвашторг учрежденийĕсем кĕрессĕ. Ку учрежденисенчи руководительсем ПВХО ĕçне йĕркелесси ответлăран та ответлă задача пулса тăнине ăнланса илессĕн мар пулмалла.

Осоавиахим хула Совечĕ халлĕхе кадрсем çинчен çителĕклĕ пĕлмест, осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсене сахал пулăшать. Чылай организацисенчен председательсем тухса кайнă, вĕсем вырăнне çĕнĕ председательсене суйласа лартман. Хулара оборона ĕçĕпе ĕçлекен чылай активистсем, сăмахран, стрелковăй спортпа ПВХО инструкторĕсем пур; вĕсем массăллă оборона ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе пархатарлă ĕç тума пултарассĕ, анчах осоавиахимăн хула Совечĕ вĕсене ку ĕçе явăçтарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет.

Халăх çине сывлăшран килсе тапăннă чухне фашистла çăхансем, пушар тăвас тесе, çунтаракан бомбăсем пăрахассĕ. Çуртра пурăнакансем пушара хăйсем хăвăрт сӳнтерме пĕлни кирлĕ, çавăнпа та кашни çуртрах пушарпа кĕрешекен звено организацилемелле.

Халăх пурăнакан пунктра тăшман сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланас ĕçре çутта маскировка туни пысăк пулăшу парать. Çутта маскировка туни противника хăй тĕлленĕ объекта тупма чăрмантарать. Çутта маскировка тăвас пирки хула исполкомĕн Совечĕ ятарласа постановлени кăларнăччĕ. Çав постановлени тăрăх, учрежденисенче, халăх пурăнакан çуртсенче çутта яланах маскировка тумалла. Апла пулин те, хăшпĕр руководительсемпе гражданисем çутта маскировка тăвас правилăна пăсколассĕ. Çутта маскировка тумашни тăшманшăн усăллă ĕç пулса тăнине кашни çыннăнах ăнланса илмелле. Çавăнпа та кас пулнă-пулманах кашни çыннăн çутта маскировка тумалла.

Хĕрлĕ Çар мухтавлă çĕнтерӳсем туни эпир лăпланса тата йăваш чунлă пулса ларма кирлине пĕлтермест. Лăпланса тата йăваш чунлă пулса ларни тăван çĕршыв умĕнче преступлени туни пулать. Çĕнтерӳ тин кăна пуçланать-ха. Тăшман аманнă, анчах вăл пĕтмен. Хăрушлăх иртсе кайман-ха. Отбой никам та паман, çавăнпа оборона ĕçне, сыхăлăха татах та çӳлерех çĕклемелле.

Г. АЛЕКСЕЕВ.
ВКП(б) хула комитечĕн çар отделĕн заведующийĕ.

Государствăна 80 килограмм сухан типĕтсе панă

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кудемерти «Коммунизм» колхозра государствăна пахча-çимĕç типĕтсе парас ĕçе питех те лайăх организациленĕ.

Паянхи куна колхоз государствăна 80 килограмм сухан типĕтсе панă. Кунпа пĕрлех тата 150 килограмм çĕрулми типĕтнĕ.

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене илессĕ

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарас тĕлĕшпе Вăрмар районĕнчи колхозсен правленийĕсемпе ялсоветсен исполкомĕсем çине тăрсах ĕçлерĕç.

Декабрĕн 22-мĕш тĕлне районĕпе 133 пин тенкĕлĕх сарнă, 80 пин тенкине пухса перекет кассине хывнă.

Арапуç ялсоветĕ 4430 тенкĕлĕх сарнă та укçине çийĕнчех пухнă. Энтриял ялсоветĕ 4100 тенкĕлĕх, Кив Мăнтăр ялсоветĕ 2100 тенкĕлĕх сарнă, укçине пухса çитернĕ. Кун пек ялсоветсене татах та илсе кăтартма пулать.

Районри учрежденисемпе предприятисенче ĕçлекенсем лотерея билечĕсене уйăхри ĕçукçин 20 процентĕнчен кая мар илме çыраннă.

«Заготзерно» хатĕрлев конторин технорукĕ Блинов юлташпа бухгалтер Шевле юлташ лотерея билечĕсене уйăхри ĕçукçин 40 процентĕ чухлĕ илме çыраннă.

Тупахри пенсионерка Т. Никифорова юлташ 130 тенкĕлĕх, тулллимар вăтам шкулти техничка Смирнова юлташ 80 тенкĕлĕх лотерея билечĕсем илессĕ.

Çав вăхăтрах Мăнçырма, Аслă Пинер, Шăплат ялсовечĕсем лотерея билечĕсене сарассипе кая юлнă-ха. Вĕсен ку тĕлĕшпе ĕçе вăйлатмалла.

И. СТЕПАНОВ.

* * *

КАЛИНИНО. Чулкасри «Смычка» колхоз членĕсем, икĕ кун хушшинчех укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене 1100 тенкĕлĕх çыранса, укçине те тӳлесе татнă.

Кӳльхĕрринчи «Трактор» колхозра та малтанхи кунах лотерея билечĕсене 1500 тенкĕлĕх, Юнтапа ялсоветне кĕрекен колхозсем 3400 тенкĕлĕх çыранса, укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

Çавăн пекех Кушар Юнтапари Каганович ячĕпе тăракан колхозра та 1300 тенкĕлĕх сарса, укçине тӳлесе татнă. Районри ĕçсыннисем фронта пур енĕпе те пулăшас шухăш-кăмăлпа укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене хавасланса çыранассĕ.

Г. МАТВЕЕВ.

* * *

ЕТĔРНЕ. Районри ĕçсыннисем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене илме пысăк хаваслăхпа çыранассĕ. Спирт тата çу завочĕсенчи рабочисемпе служащисем 13 пин тенкĕлĕх лотерея билечĕсем илме çыраннă. Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 4 пин, Кăташ ялсоветне кĕрекен колхоз членĕсем 8 пин тенкĕлĕх илессĕ. Талуйĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Трофимов, Архипов, Китаев, Петров юлташсем 50-шар тенкĕлĕх илме çыранчĕç. Ку колхозри колхозниксем 1700 тенкĕлĕх илме çыранса укçине те 1.100 тенкĕ парса татнă.

Н. ЦВЕТКОВ.

ОКТЯБРЬСКОЕ. Вăрманкассинчи «Культура» колхозра çĕнĕ лотерея билечĕсене 510 тенкĕлĕх сарнă. Колхозник М. Рыбкин юлташ лотерея билечĕсене 50 тенкĕлĕх, А. Журавлева юлташ—20 тенкĕлĕх илме çыранса, укçине çавăнтах тӳлесе татнă.

Кудемерти «Коммунизм» колхозра та укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарас ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Колхоз председателĕ А. Семенов, счетовод Ф. Долгов юлташсем лотерея билечĕсене 100-шер тенкĕлĕх илме çыранса, укçине пĕтĕмпех парса татнă. Вĕсене курса ытти колхозниксем те лотерея билечĕсене 20—30-шер тенкĕлĕх илме çыранчĕç, нумайĕшĕ укçине те тӳлесе татрĕç.

Наратчаккинчи «Красное Сормово» колхозра лотерея билечĕсене 750 тенкĕлĕх илме çыраннă, укçине пухса перекет кассине хывнă.

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене илес ĕç районри шкулсенче анлăн сарăлса пырать. Октябрьскинчи вăтам шкулти учительсем М. Ивановăпа А. Руденко юлташсем 140-шер тенкĕлĕх, М. Чупракова юлташ 100 тенкĕлĕх, тата ыттисем те лотерея билечĕсене илме çыранчĕç. Унта лотерея билечĕсене пĕтĕмпе 1400 тенкĕлĕх сарнă.

П. ПАВЛОВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Исаково ялсоветне кĕрекен колхозенче укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарас ĕç анлăн сарăлса пырать. «Красная звезда» колхозăн бригадирĕ Н. Филиппов юлташ лотерея билечĕсене 30 тенкĕлĕх илме çыранчĕ, укçине унтах тӳлерĕ. Вăл ытти колхозниксене те çавăн пек тума чĕнчĕ. С. Ефимов, Я. Никитин, Н. Степанов тата ытти юлташсем те лотерея билечĕсене 30-шар тенкĕлĕх илме çыранса укçине тӳлерĕç. «Красный пахарь» колхозра лотерея билечĕсене 1630 тенкĕлĕх, «Исаково» колхозра 1010 тенкĕлĕх сарнă. Ялсоветне кĕрекен колхозсенче лотерея билечĕсене пĕтĕмпе 3120 тенкĕлĕх сарнă, укçине 50 процента яхăн пухнă.

Я. НИКИТИН.

* * *

КУКЕÇ. Солянова ялсоветне кĕрекен колхоз членĕсем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене пысăк хаваслăхпа çыранса илчĕç. «Правда» колхоз членĕсем лотерея билечĕсене мĕнпурĕ 3600 тенкĕлĕх илме çыранса, 2000 тенкине çийĕнчех тӳлерĕç. «Вторая пятилетка» колхоз членĕсем 1000 тенкĕлĕх илме çыранчĕç те укçине пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç.

И. ВАСИЛЬЕВ.

Колхозсен пуянлăхĕ çулран-çул ӳссе пырать

Уравăш тата Анаткас Уравăш ĕлĕк пĕр ял пулнă. Урам тăршшĕпе улăмпитнĕ лапчăк çуртсенчи ĕçсыннисем çăкăр-тăвара аран çитеркелесе пурăннă. Ял варринче пĕр чиркӳ кăна çутăн куранса ларнă.

Партипе правительство пулăшнипе вак хуçалăхсене колхоза пĕрлештерсе, ĕçсыннисем çулран-çул лайăхрах пурăнма тытăнчĕç. Халĕ Уравăш ялĕнче икĕ колхоз. Пĕри — «1-ое Мая» ятлă, тепри — Киров ячĕпе хисепленсе тăрать. Колхозлă пуян пурнăç ял тĕсне тĕпренех улăштарчĕ. Ял хула майлăн ӳсрĕ. Кунта халĕ вăтам шкул, больница, ача çуратмалли çурт, сельпо, ресторан, парикмахерски тата ытти те пур.

1941 çулта колхозсем вăйлă тырпул, тухăçлă пахча-çимĕç туса илчĕç. Киров ячĕпе тăракан колхоз планпа кашни гектартан 16-шар центнер тĕштырă илме палăртнă пулсан, 20-шер центнер туса илчĕ. Колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана та ирттерсе пурнăçларĕç. Е. Федотов колхозник колхоз фермисен заведующийĕ пулса ĕçлет. Вăл тăрăшса ĕçленипе кăçал Киров ячĕпе тăракан колхозăн сысна фермийĕ кашни сысна аминчен 16—18-шар çурă çитĕнтернĕ. К. Яшина колхозница чăх-чĕп фермипче 120 чăх пăхса ӳстерчĕ. Ферма кăçал государствăна 2 пин ытла çăмарта пачĕ. Мĕнçу каçиччен ĕçлесе, К. Яшина кăçал 700 ĕçкунĕ турĕ. Вĕсем çине вăл сахалтан та 150—200 пăт тĕштырă, пахча-çимĕç илет.

Колхозниксем пуян та культурăллă пурăнассĕ. Судаков, Владимиров колхозниксем 700—800-шер ĕçкунĕ турĕç. Г. Захаров, И. Алях, И. Цыпленков колхозниксем ĕлĕк выльăх-чĕрлĕхсĕр, пӳрт-çуртсăр пурăннă пулсан, халĕ тутă та пуян пурнăçпа пурăнма пуçларĕç. Çĕнĕ çуртсем лартрĕç, выльăх-чĕрлĕхлĕ пурăнассĕ, самоварсем, велосипедсем, çĕвĕ çĕлекен машинăсем илчĕç.

Колхоз кăçал ĕçкунĕсем çине 4-шар килограмм таран тĕштырă валеçет. Государство умĕнчи обязательствăсене тата натуроплатăна вăл пĕтĕмпех тултарчĕ. Çитес çывăх кунсенчех авăн çапса пĕтерет.

Киров ячĕпе тăракан колхоз пекех, «1-ое Мая» колхоз та хăйĕн пуянлăхне çулран çул ӳстерсе пырать. Çак икĕ колхоза нумай çул хушши ĕнтĕ пултарулла, ĕçе лайăх организацилеме пĕлекен председательсем А. И. Иванов (Киров ячĕпе тăракан колхоз), Я. В. Васильев («1-ое Мая» колхоз) юлташсем ертсе пырассĕ. Колхоз ĕçĕсене колхозниксемпе пĕрле ялти вăтам шкулта вĕренекен комсомолецсемпе пионерсем, учительсем тата ялти ытти интеллигентсем те активлăн хутшăнса ĕçлессĕ. Вăтам шкул директорĕ Филиппов юлташ, Кириллов, Иванова учительсем колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе авăн туса пырассĕ.

Колхозсем 1942 çулта татах та вăйлă тырпул туса илме, çуракине хатĕрленме вăйлăн тытăнчĕç. Вăрлăхсене сортласа хучĕç, ялхуçалăх машинисене юсассĕ, çĕнĕ урапасем тăвассĕ.

В. ЦЫПЛЕНКОВ.

Вăрнар р.

Йĕлтĕр çине!

Нимĕçсем «çисĕм пек хăвăрт» çĕнтерӳ туса, хĕл пулаччен вăрçа вĕçлеме ĕмĕтленчĕç. Анчах та чăн-чăн пурнăç вĕсем ĕмĕтленнĕ пек пулмарĕ. Фашистсен вырăс çĕршывĕнчи çил-тăманлă, вăтăр-хĕрĕх градуслă шартлама сивĕ хĕле тӳсме тивет.

Хĕл вăл пирĕншĕн чăрмав мар, вăл — пирĕн союзник. Сивве хăнăхнă вырăс çарĕ хăйĕн историйĕнче хĕллехи вăхăтра та питĕ чаплă çĕнтерӳсем тунă. Тĕслĕхрен, Суворов Альпа урлă каçни çине, 1915 çулта хĕлле Сарыкамышра туса ирттернĕ паллă операци çине кăтартса парсан та çителĕклĕ. Хĕрлĕ Çар граждан вăрçи вăхăтĕнче тата 1939—1940 çç. финсемпе вăрçнă чухне питĕ паха примерсем кăтартса пачĕ.

Йĕлтĕр çине тăнă пехота вырăнтан вырăна питĕ хăвăрт куçса çӳреме пултарать. Çапла вара, вăл тăшман çине хăвăрт та кĕтмен çĕртен пырса тапăнма пултарать. Маршсенче йĕлтĕрçĕ-боец хăвăртрах каять тата часах ывăнмасть.

Хĕллехи условисенче йĕлтĕрсĕр ăнăçлă çапăçма çук. Çавăнпа та Хĕрлĕ Çар боецĕсен çеç мар, ССР Союзĕнче çар ĕçне вĕренекен граждансен пурин те йĕлтĕрпе çӳреме вĕренес пулать.

Фронтри обстановка тем пек йывăр пулсан та, действующи çарăн боецĕсем çапăçусем хушшинчи кашни пушă самантрах йĕлтĕрпе çӳреме вĕренсе, ăсталанса пырассĕ.

Паян всевобуч боецĕ пулса тăракан çын ыран çапăçу хирĕнче пулма пултарать. Çавăнпа та унăн хăй тылра пулнă вăхăтра йĕлтĕрпе çӳреме лайăх вĕренсе çитмелле.

Всевобуч программине йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентесси те кĕрет. Всевобуч боецĕсене йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес ĕçе спорт организацийĕсене анлăн явăçтармалла. Çакăнпа пĕрлех тата Хĕрлĕ Çарта йĕлтĕрпе усă курнин пуян опытне анлăн сарса пымалла.

1939—1940 çç. Финляндине хирĕç вăрçни пире усăллă опытсем пачĕ. Çак вăрçă автоматсемпе хĕçпăшалланнă йĕлтĕрçĕсен отрячĕсем мĕнле ăнăçлă ĕçсем тума пултарнине кăтартса пачĕ. Çакăн пек отрядсем пуринчен ытларах тăшманăн тылне шăла кĕрсе кайса, унăн вăйĕсене разведка туса пĕлессинче питĕ ăнăçлă ĕçсем тăвассĕ.

Çакăнпа пĕрлех йĕлтĕрçĕсен отрячĕсем тăшманăн штабĕсемпе коммуникацийĕсем çине те ăнăçлăн тапăнма пултарассĕ. Вĕсем хамăрăн войскăсен усă флангĕсене хӳтлесе тăма, авиадесант антармалли вырăна тасатма, тăшманăн авиадесанчĕсене хирĕç кĕрешме пултарассĕ.

Отечественнăй аслă вăрçăн фрончĕсенчен килнĕ юлашки хыпарсем пирĕн йĕлтĕрçĕ-боецсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешни çинчен каласа парассĕ. Пирĕн йĕлтĕрçĕ-боецсем вăрçă операцийĕсене хутшăннисĕр пуçне, тата чакакан тăшмана хыçран та хăваласа пырассĕ.

Хальхи вăхăтри вăрçăра час-часах фронтăн хăйне уйрăм линийĕ пулмасть. Сивĕ хĕл войскăсене çулсем çывăхне, халăх пурăнакан пунктсем патне хăваласа пухать. Çавăнпа та тăшман войскисен чаçĕсем пĕр-пĕринчен аякра вырнаçса тăрассĕ. Çакă ĕнтĕ пирĕн йĕлтĕрçĕ-боецсене тăшманăн тылне кĕрсе кайса, унăн чĕрĕ вăйне, техникине, сыхăну средствийĕсене, транспорчĕсене, кĕперĕсене, склачĕсемпе базисене пĕтерсе тăкма май парать. Хăшпĕр чухне тата йĕлтĕрçĕ-боецсем тăшманăн резерв пымалли е чакмалли çулĕсене татса хăйсен аллинче тытса тăма пултарассĕ. Кĕскен каласан, йĕлтĕрçĕ-боецсен подразделенийĕ истребительнăй отряд тăвакан ĕçсене туса пыма пултарать.

«Паянтан пирĕн задача, ССР Союзĕнчи халăхсен задачи, пирĕн çарпа пирĕн флотри боецсен, командирсемпе политработниксен задачи — пирĕн тăван çĕршыв территорийĕ çине, ăна оккупацилекенсем пулса, сĕмсĕрленсе кĕнĕ нимĕçсене пурне те, пĕр çын юлмиччен, пĕтерсе тăкасси пулса тăрать», терĕ Сталин юлташ.

Çак задачăна ăнăçлă татса парассинче йĕлтĕрçĕ-боецсем питĕ пысăк ĕç тума пултарассĕ. Вĕсем тăшмана харсăррăн та хăвăрт пыра-пыра çапса, нимĕç оккупанчĕсене тăтăшах нимĕн шеллемесĕр пĕтерсе пырĕç.

Йĕлтĕр çинче пулса çапăçасси йĕлтĕрпе çӳрессинчен тата йĕлтĕрпе боевой ĕçсем тăвассинчен тăрать.

Боецăн кирек мĕнле вырăнта та йĕлтĕрпе çӳреме лайăх пĕлмелле. Анчах ку сахал-ха. Кунсăр пуçне йĕлтĕрçĕ-боецăн çапăçура тĕрлĕ приемсемпе усă курма пĕлмелле.

Çапăçăва кĕрсе каяс умĕн йĕлтĕрçĕ-боецăн час-часах чылай вăрăм çула хăвăрт тухма тивет. Паллах ĕнтĕ, хĕçпăшаллă тата снаряжениллĕ боецăн йĕлтĕрпе вăрăм çула тухма чылаях вăй пĕтет. Кунсăр пуçне çапăçусем татах та ытларах вăй пĕтерессĕ. Хăйĕн вăйĕпе перекетлĕ усă куракан боец çеç çапăçура çĕнтерӳ тума пултарать. Çавăнпа та ĕнтĕ боецсене хăйсен вăйĕпе перекетлĕ усă курма вĕрентес, чăтăмлă тăвас, тĕрлĕ обстановкăна хăнăхтарас шутпа тăтăшах тренировка туни питĕ кирлĕ.

Йĕлтĕрпе çӳреме, боевой ĕçсем тума тăтăшах çирĕплетмелли тренировкăсемпе сыхăнтарса туса пымалла. Тренировкăсене тĕрлĕ чăрмавсемлĕ вырăнсенче туса ирттерсен лайăхрах. Вĕренекенсене кашни занятирех пĕр маршрутпа çӳреме юрамасть. Вĕренекен боецсене пуринчен ытларах юр хывса кайнă, йĕлтĕрпе çӳресе йĕр хăварман вырăнсенче çӳретмелле, мĕншĕн тесен вăрçă обстановкинче боецăн шăпах ĕнтĕ çакăн пек условисенче çӳреме тивет.

Вăрçă вăхăтĕнче йĕлтĕрçĕ хăйĕн çулĕ çинче тĕрлĕ чăрмавсем тĕл пулать. Çав чăрмавсенчен аякран пăрăнса иртсе кайма вăхăта усăсăр сая ярас мар тесен, унăн чăрмавсем урлă каçас пулать. Çавăнпа та вĕрентнĕ чухне пĕр чăрмавран та тавралла çаврăнса иртсе кайма юрамасть, çул çинчи кашни чăрмавах çĕнтерсе илмелле. Чăрмавсене çĕнтерсе илес тĕлĕшпе кашни занятирех тренировкăсем тумалла.

Анчах та йĕлтĕрпе çӳреме тата çапăçма вĕрентнĕ чухне çакăн пек йăнăш тăвассинчен сыхланмалла. Йĕлтĕрçĕ-боец вăрçăра винтовкăпа çапăçать, урăхла каласан, тăшмана персе, е штыкпа чиксе пĕтерсе тăкать. Апла пулсан, çапăçу вăхăтĕнче унăн аллинче йĕлтĕр патаккисем мар, винтовка пулмалла. Çавăнпа та унăн патаксемсĕрех йĕлтĕрпе çӳреме, тĕрлĕ приемсем тума хăнăхмалла. Патаксемпе хăвăрт каймалла чухне çеç усă курмалла.

Йĕлтĕрçĕ-боецăн ĕçĕнче çапăçу хирĕнче вăрттăн куçса çӳресси питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ку тĕлĕшпе кашни занятирех тивĕçлĕ тренировкăсем туса ирттермелле. Стрелковăй занятисенче боецсен çапăçу уйхирĕнче йĕлтĕрпе мĕнле куçса çӳрессине вĕрентесси çине пачах та çаврăнса пăхман тĕслĕхсем те пур-ха. Упаленсе е шуса каясси вырăнне боецсем тăрса çӳрессĕ, тивĕçлĕ приемсене вăрçăри пек мар, вăйăри пек тăвассĕ. Çаксене условно тăвассине йăлтах пĕтермелле, пур ĕçсене те вăрçăри пекех сыхланса тата хастарлăн туса пымалла. Çакă ĕнтĕ вĕренӳре тĕп вырăнта тăмалла. Йĕлтĕрçĕ-боец вĕренӳре примерсене чăн-чăн боевой обстановкăри пекех тĕрĕс тăвать пулсан, вăл хăйне кирлĕ хăнăхусене те хăвăртрах вĕренсе çитет.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем, всевобуч, рабочи батальонсен тата истребительнăй отрядсен боецĕсем йĕлтĕр çине тăрассĕ. Фронта ытларах та ытларах йĕлтĕр, йĕлтĕр патакки, йĕлтĕр мазĕ кирлĕ. Йĕлтĕр тăвакан рабочисем хăйсем халĕ ахаль «спортинвентарь» мар, оборонăн паха заказне тунине асра тытса тăччăр.

Вăрман сывăхĕнчи кашни хуларах, кашни районрах йĕлтĕр тăвас ĕçе организацилеме пулать. Промышленноçăн, промысла кооперацин задачи— фронт валли, запасри чаçсем валли, всевобуч валли йĕлтĕрсем çителĕклĕ туса парасси пулать.

Йĕлтĕрçĕсен лайăх вĕренсе çитнĕ резервĕсем пире çĕршыва килсе кĕнĕ тăшмана хăвăртрах аркатса тăкма пулăшассĕ.

Полковник А. НЕРЧЕНКО.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленноçть пайĕсен — 8—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23 «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 30° Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.